К 84.09(=498)
Ф33
Ч-49031



Любовь ФЕДОРОВА

# Утакана – çил хирĕç

*Калавсем*

*Поэмăсем*

Шупашкар – 2014

Национальная библиотека ЧР
4-049031

Обязат

Любовь ФЕДОРОВА

# Утакана – çил хирĕç

Калавсем

Поэмăсем

Шупашкар – 2014

**Любовь Федорова**

**Утакана – çил хирĕç.** Калавсемпе поэмăсем. – Шупашкар, 2015. – 79 стр.

«Утакана – çил хирĕç» кĕнекене Любовь Федорова шкулсенче аслă классенче вĕренекенсем валли кăларнă, ăна ватти-вĕтти те хаваспах йышăнĕ. Кунта Тăван çĕр-шывăн Аттелĕх вăрçипе ун хыççăнхи пурнăçа сăнланă.

Проверено 6 сен 2017

4-49031

Национальная библиотека
Чувашской Республики



## Çĕр

*Калав*

Петĕр паян уйрăм хуçалăхсен хуралтă хыçĕнчи çĕрĕсене виççе çÿрет. Ку ĕçе кашни çулах тăвать вăл, çынсем, пахчасене тракторпа сухаласа кайнă хыççăн, ниепле те хăйсен тăрăхла лаптăкăн чиккине тĕп-тĕрĕс палăртаймаççĕ.

Хирĕçÿ-çапăçу ан тухтăр тесе, колхоз кас хĕрринчи çĕре виçĕ-тăватă метр ытларах айккине кăларса сухалать, трактор çаврăнмалли вырăн шутланать вăл, пĕрех кам та пулин кăмăлсăр.

– Микулай, лаша пуçне тыт-ха, çĕр улмине лартса пăрахар. Куçупа ав çав пахча вĕçĕнчи шалчана тĕлле, ан пăркалан, эпĕ сухапуçне тытам, – терĕ ывăлне Арçени пичче. Малтанхи касă хыççăнах кÿршĕ-аршă, тăван-пĕтен вăрлăх акма пуçларĕ. Çирĕм пилĕк-вăтăр сантиметртра – пĕр улма. Çĕр ĕçченĕ йăрана лайăх хуплаштарма пĕлет, сухапуç тытса курман арçын йăранĕсем вара е тĕлĕнмелле сарлака, кукăр-макăр, е шутсăр тăвăр пулаççĕ.

Çур пахчана лартса пĕтернĕ май шÿтлеме юратакан хĕрĕхсене çывхарнă Маюк аппа фермăра дояркăра ĕçлекен нар пек питлĕ, тулли кĕлеткеллĕ Наталие йăран хушшине вырттарчĕ те:

– Улми çак хĕр пек тĕреклĕ те шултăра пултăр! – терĕ.

Лашана кăшт кантарса илнĕ хушăра пахчана Пăраскави аппа апат-çимĕç, килти сăра илсе тухрĕ.

–Машук, Униççе, Валя, Тарье, Муççей, Толик… Килĕр-ха кунтарах, пĕрер алтăр кăпăклă сăра ĕçер, кашнине пĕрер çăмарта акă, тăварланă хăяр тутанса пăхар.

Кăшт çырткаланă хыççăн ял-йыш каллех çĕр улми лартма тытăнчĕ.

Урамсем пӑраннӑ вырӑнта плантӑсем пӗрлешеҫҫӗ, тракторист хуҫалӑх ҫӗрӗсене таптас мар тесе питӗ асӑрханса сухалать. Пӗр касӑ тунӑ хыҫҫӑн сасартӑк пахча вӗсне Улатимӗр тетепе Кӗҫени аппа чупса ҫитрӗҫ. Вӗсем сухаласа пыракан гусеницӑллӑ трактор умнех пырса тӑчӗҫ. Иванӗ «тимӗр утне» епле чарса ӗлкӗрчӗ-ши?

– Ан кӗр пирӗн пата! Ҫӗре сухалаттармастпӑр, ав Куҫуксен пахчи вӗҫӗнчен ҫаврӑнӑр, плантӑна пӗрех таптаттармастпӑр! – тесе кӑшкӑрать Кӗҫени аппа.

Ватӑсем пӗтӗм вӑйран трактора каялла тӗртеҫҫӗ. Майӗ ҫук.

Куҫук тете сӑмах мӗн ҫинчен пынине тӳрех ӑнланса илчӗ:

– Володя, пирӗн пахчапа ҫаврӑн. Мӗн хӑрамалли? Таптанӗ те, ҫемҫелӗ те. Турӑ парсан улма чул ҫинче те ӳсет.

Каланӑ, – тунӑ.

Макҫӑм мучи те пахчара. Вӑл вӑтӑр ҫул ытла аякри ял чиркӗвне ҫуран ҫӳретчӗ. Ҫул ҫинче ӑна лартса килес тесе мӗн чухлӗ машина чарман-тӑр.

– Лар, Макҫӑм мучи, утса ывӑнтӑн пуль, – тесен…

– Ҫӗр вӑл ҫемҫе, урасене канӑҫ парать, – тетчӗ.

Пӑхатпӑр та: Макҫӑм мучин пахчинче пурӗ икӗ михӗ ҫӗр улми. Ҫӗрӗ вара пилӗк-ултӑ йӑран лартмалӑх ҫеҫ.

Ял бригадирӗ трактористпа калаҫкаланӑ хушӑра сасартӑк Макҫӑм мучипе Кӗтерук инкен пӗчӗк ҫӗр улми лаптӑкне асӑрхарӗ те:

– Максим Петрович, эсир ҫӗре сутса ямарӑр пулӗ? Иккӗмӗш ҫӑкӑр кирлӗ мар-им сире?

– Карчӑкпа иксӗмӗре хӗл каҫма пире пилӗк-ултӑ михӗ ҫитет, турӑ парсан качакана ҫитерме те ҫитӗ, памасан – пулмӗ, пурӑнӑпӑр. Икӗ енчи кӳршӗсен ачи-пӑчи йышлӑ, апат-ҫимӗҫ вӗсене ытларах кирлӗ, лартса ӳстерччӗр, – терӗмӗр. – Хӗрӗсем вӗренеҫҫӗ тата.

Ҫӗр улми лартса пӗтернӗ хыҫҫӑн урам вӗҫӗнче пурӑнакан Хӗветӗр тетесем патне бригадирпа ял совет председателӗ

чаранчĕç. Мĕн сăлтавпа килнине пĕлсен Хветĕр тетепе Лидюк аппа вĕсене пахчана илсе тухрĕç. Çĕр улми лаптăкĕн сулахай енне йĕри-тавра карта тытса çаврăннă. Шалта улма-çырла йывăççисем, хурăн, çăка, йăмра, çирĕк, шĕшкĕ лартса тултарнă. Чăн-чăн вăрман. Ак тамаша! Унта-кунта кăтра кăмпа шăтса тухнă, йывăççем çывăхĕнче лантăш, шăнкăрав курăкĕ, хурăн, çĕр çырли çеçкисем ӳсеççĕ.

Йывăççене ретĕн-ретĕн пĕр виçепе тип-тикĕс лартнă, пилешпе палан та пур.

Хĕветĕр пиччепе Лидюк аппан ывăлĕ Питĕрте вăрман хуçалăхĕн академийĕнче вĕренет. Çуркунне вăл яла килет. Олег çав хушăра çывăхри ялсенче çурт каскаласа çӳрет, йĕпе-сапара вара Аслă вăрмана кайса çамрăк йывăç тĕпĕсене кăларса килет те пахчана лартать. Тарăн çырма пуçĕсене йăмра тураттисем тирсе тухнă, вĕсем халь тем çӳллĕш ӳссе кайрĕç, çурхи шыв çĕре малалла çурма пăрахрĕ.

Василий Степанович, ял бригадирĕ, Хĕветĕр пичче çурчĕ тĕлне çитсен чарăнса шухăша каятчĕ: Лидюка юратса миçе çул асапланмарĕ-ши вăл, çак вăрттăн туйăма усçăн пĕлтерме халиччен те хăюлăх çитмерĕ. Олег лартса ӳстернĕ аллейăна хăй куçĕпе курчĕ те: «Чунăмçăм, Лисук, ывăлу та ху пекех ăслă», – терĕ ăшĕнче.

Клавдюк аппапа Петĕр Мучи çĕр улмине кăларса пĕтернĕ, анчах ăна тĕп сакайне хума васкамарĕç-ха.

– Ёлкĕрет, – терĕç. – Малтан кăштах хĕвел çинче типшĕртĕр, лупасайĕнче выртса сывлатăр та нӳхрепе хурăпăр. Ыттине – тĕп сакайне. Ачасене хулана парса ямаллине – уйрăм çĕре.

– Петюк, нӳхрепе тасатса, хурт-кăпшанкăсене пĕтерме кăшт улăм çунтарса илер пулĕ. Çĕр шаписем ĕрчесе кайнă пулмалла унта.

– Клавдюк, малтан, шапасене, витрене пуçтарса тултарар, вĕсене пахчана ирĕке кăларса ярар, тĕтĕмпе чыхăнтарса вĕлерер мар-ха, чунăм. Пурăнччăрах. Вĕсен усси пысăк.

Ахальтен çĕр шапи тесе каламаççĕ вĕт çав чĕр чунсене. Сиенлĕ хурт-кăпшанкăсене эсĕ çиетĕн-и? Эпĕ-и?

Клавдюк аппапа Петюк мучи нӳхрепрен çур витре çĕр шапи пуçтарса кăларчĕç

– Пăх-ха, кунĕ вĕсем. Пысăк куçĕсене чарса пăрахнă та ним хускалмасăр выртаççĕ. Хăваласан та аякка каясшăн мар.

Ватăсем нӳхрепе тасатса кăларчĕç, кăштах улăм çунтарса илчĕç. Капла çĕр улмине упрама та кăмăллă.

Хăва кассине утнă май Çтаппан Минюк аппапа Мирун пичче парникра чакаланнине асăрхарĕ. Хайсем пуç çапнă евĕр авăнаççĕ, унтан тӳрленеççĕ.

Арçын сăмах хушмасăр чăтаймарĕ:

– Мĕн тăватăр эсир çак вăхăтра? Тĕттĕмленчĕ вĕт. Ĕçле-ĕçле пилĕкĕр хуçăлать-тĕр.

– Каларăн та, – терĕ Мирун пичче, – ĕçлесе кам вилекен пулнă? Çын ĕçпе мар, ĕçкĕпе леш тĕнчене ăсанать. Арăмпа помидор-хăяр лартма парник тăватпăр эпир. Халь ĕлĕкхи пек мар, çӳлте кĕтмен-çĕртен тем амакĕ çăвать те пĕтĕм лартса ӳстернĕ пахча-çимĕçе çитĕнсе çитиччен хуратса ярать, шутлатăн та, ĕç харама каять вĕт.

– Мĕн çĕнĕ технологи шутласа кăлартăр-ха тата?

– Темех мар. Ара, телевизор кура-кура тем тума та вĕренсе çитетĕн. Ĕнер Израильте епле темиçе хутчен тутлă пахча-çимĕç туса илни çинчен каласа кăтартрĕç. Вĕсен çĕрĕ те пирĕнни пек тулăхлă мар, йĕри-тавра хăйăр. Çав хăйăрлă çĕр çинче пĕтĕм тĕнчене тăранмалăх майсем шыраса тупнă. Тăпрана пăслантарса нӳрлетеççĕ те – сывлăшĕ те çителĕклĕ кунта, çимĕçĕ ниçта кайса кĕмелле мар çитĕнме пуçлать. Израиль çыннисем тислĕк шывĕпе те усă кураççĕ, паллах. Эпир мĕнрен кая? Арăма:

– Минюк, атя эпир те çĕнĕлле пурăнма тытăнар-ха, – тетĕп. – Картишĕнче турпаспа шыв вĕретсе илер те тислĕке унпа шăварар: сиенлĕ хурт-кăпшанкăсем вилеççĕ, çĕрĕ

ăшăнать те ӳсен-тăран тымарĕ часах йăл илет. Арăм манпа тӳрех килĕшесшĕн пулмарĕ:

– Ара, Мирун, ватăлнăçемĕн йӳтесе пыратпăр пулĕ çав ĕнтĕ, эпир хăçан хăяр-помидора вĕри шыв сапса ӳстернĕ? Тата çав Китай çынни сан пуçна аванах пăтратса хăварнă. Лешĕ: Бичурин çĕр-шывне çитсе куртăм тесе савăнса сиккелет, – тет. Китай ăстисене чăвашсен пуçлăхĕ тахăш çырма урлă чаплă кĕпер хывтарасшăн имĕш. Кĕпер хывасси те асамат кĕперĕ карасси вара? Çăп-çămăл туса лартăччĕç. Проектне хатĕрлесе çитериччен тинкӳ тухĕ. Кайран кĕперĕ кĕвенте пек авăнса анать. Пĕтĕмпех пуç хĕрлĕ шыв айне чăмаççĕ.

– Карчăк, ытла та нумай пĕлетĕн эсĕ. Чĕлхӳне кăштах çырт-ха. Сан пек çынсене халь «Сепаратист» тесе йăпăр-япăр тĕрмене лартма пултараççĕ.

– «Сĕт паракан артист» тенĕшĕн мĕншĕн ирĕкрен хăтармалла вара? Сĕт пани, старикĕм, шыв пани мар вĕт. Тутлă, усăллă, чĕрене пырать.

– Эй, санпа.

Кĕркунне. Хĕвел ăшшăн пăхать. Пахча вĕçĕнчи çулпа Ирина Григорьевна вĕрентекен утса пырать. Ачасем патне васкать пулмалла. Сасартăк вăл тăп чарăнчĕ.

– Ку кам пахчи? – тет.

– Варламовсен. Ывăлĕ пиллĕкмĕш класра вĕренет.

– Ăнланаймарăм-ха, мĕн те пулин акнă-и кунта?

– Акмасăр. Çĕр улми çитĕннĕ, – тет Анахвис инке.

Мăшăрĕ, Кавĕрле, нимĕн те чĕнмест.

– Çĕр улми çын çӳллĕш çитĕнмест пулĕ ĕнтĕ?

– Э, Ирина Григорьевна,Эсир математик çав, Мариванна биолог çак анана курсан тӳрех:

– Ачасене мăян вăрманне экскурсие илсе килетĕп-ха, – терĕ. – Кур, мĕн çӳллĕш.

Каç пуласпа Варламовсем çĕр улми кăларма тухрĕç. Минькка малтан ларса пăхрĕ, Евтук арăмĕ чылай тавраналла, хăйсен пахчинелле пăхса тăнă хыççăн хыçалти алăкран витене

кĕрсе çава илсе тухрĕ. Тăрăшса унпа типĕ мăяна çапма пуçларĕ. Пĕр вунă метр пек сулларĕ-сулларĕ, тылларĕ-тылларĕ, сасартăк çави аври шарт! çурмалла хуçăлса кайрĕ.

Тарăхнипе Евтук аппа çава пеккине лупас хыçне вăркăнтарчĕ.

– Мухмăрĕ вĕлерет тата. Кам пĕр черкке парать-ши? Улму-масару, ара, чим-ха? Кăштах вĕтти те пулин пур-ши кунта? Миньккa, çак йывăç кĕреçепе чавса пăх-ха.

Упăшки хытса кайнă çĕре асаплана-асаплана йывăç калакпа хайăрать. Çур метр пек чавсан пĕр пĕчĕк салма пысăкăш улма сиксе тухрĕ, тата икĕ метртан – тепре.

Эрне каялла Çумкка Дими хĕр кăларчĕ. Туй хыççăн вăл Оля арăмĕпе пахчана çĕр улми кăларма тухрĕ. Мăшăрĕ – вырăс майри. Дима калакпа хуçкалана-хуçкалана çĕр улмине кăларса унталла-кунталла ывăтать. Оли вара Дима мăйĕнчен уртăннă та ăна ни малалла, ни каялла утма памасть. Вунă минут çапла ейкеленнĕ хыççăн майра:

– Дима, зачем нам картофель?

– Для супчика, скажем.

– Я предпочитаю гречку, мясные блюда.

– Чуваши не могут жить без картофеля.

– Я не чувашка. Ты сейчас тоже русский. Мне не нравится твоя фамилия «Арланов». Ты хомяк что ли? Дима, поедем на Кипр? – терĕ те мăшăрне килне çавăтса кĕчĕ.

Вĕсен калаçăвне йăлтах илтсе пулмарĕ.

– Митрахван мунчине кĕленчерен тума шутланă-им? Пăхăр-ха, – терĕ тĕлĕнсе кӳрши Тимуш.

– Çапла. Ывăлĕпе нумаях пулмасть Японие кайса килнĕ. Тахçан-авал хаçат-журналсенче пичетленĕ статьясене ĕненсе мучи хĕвел-тухăç çĕрĕнче пач сывлăш çук тесе шутласа пурăннă. Самолетран тухса трап тăрăх аннă чух старик ӳпке тулли озон сывласа илет те: «Чутах антăхса каяттăмччĕ, – тет. Çумăр çуса иртнĕ хыççăн та хамăр хырлăхра ĕмĕрĕмре çавнашкал уçă сывлăш сывласа курман эпĕ», – тет.

– Тата мĕн хыпар пур, Хветуç аппа?

– Çав Митрахван мучи пиркиех каласа парасшăн-ха эпĕ.

Хайхискере çитнĕ-çитменех ресторана илсе каяççĕ. Сĕтел хушшинче. Мучи унталла-кунталла пăхкаласа илет, пур çĕрте те йăлтăр-ялтăр, тĕрлĕ çутă вылять. Ватă çын сасартăк апат хатĕрлесе параканнине асăрхать. Аллинчи çĕççисем вăрт-варт çаврăнкалаççĕ, кашăк-вилкисем те çаплах. Виртуаллă теççĕ-и-ха çакнашкал хусканусене? Куçпа сăнаса ĕлкĕрмелле мар сăнлăх, чăн та.

Мучи сĕтелĕ çинче – тĕрлĕ апат-çимĕç. Официант хăйĕн чĕлхипе:

– «Хуç», «Хориса», «Хулеш» текелет. Ватăскер: «гусь, курица, гуляш» тесе ăнланчĕ пулас. Кăмăллăн кулкалать. Яппунсем епле ырă кăмăллă иккен тесе шутласа илет.

Çисе тăраннă хыççăн мучие хăйсем хатĕрлекен апат-çимĕçĕн чăн-чăн чĕр чунĕсене кăтартма илсе каяççĕ.

Митрахван мучи тарăн савăтри хурт-кăпшанкăсене курсан чĕнейми пулать. Ара, унта эрешменĕ-шăни, шапи-калти, ăманĕ-тараканĕ, кĕви-вăрăм туни, ўпри… Тем те пур. Тепĕр хуранта тĕрлĕ çĕлен: ула-чăли, сарри-симĕсси, хĕрли-кĕренни, пăваканни, сăхаканни…

Мучие çав шăвакан, чупакан, вĕçекен чĕр чунсене йăлтах ăшаласа çитернĕ иккен. Ватăскерĕн кăмăлĕ пăтранса кайнă пек пулчĕ, анчах ресторан хуçи вырăс сăмахне: «Полесно», – тесе калавă хыççăн:

– Пирĕн ялта шăши, шапа, йĕке хўре нумай, йăлтах пырса тытăр, тăраниччен çийĕр, – тесе хучĕ. – Мана чăх какайĕ те юрать.

Хăйĕн пуçне çапах та, яппунсен рецепчĕпе усă курса, хурт-кăпшанкăсенчен ял-йыша хăналама апат хатĕрлес шухăш пырса кĕчĕ.

–Менюне яппунлах çыратăп: «Йăкка хурэ», «Акалда», «Омман», «Вармдуна». Аван илтĕнет вĕт.

Чăваш çĕрĕ çĕлен-калтаран чухăн-и вара?

Митрахван мучи виçĕ кун хушшинче пĕвери пур шапана та тытса пĕтерчĕ пуль. Квак-кваксен пĕççинчен тем тĕрлĕ салат хатĕрлеме вĕренчĕ. Чи малтан унăн апатне тутанса пăхаканни савнă арăмĕ Пăлаки пулчĕ.

– Старик, çитмĕл çула çитсе эпĕ халиччен сан пек тутлă апат пĕçерекен ар çына курман, ай-ай, сĕтеклĕ вара салату. Чĕлхене çăтса ямалла. Кун пек асамлă çимĕçе хаклă хăнасем умне лартма та намăс мар.

– Э, карчăкăм, кӳршĕ-аршă, тăван-пĕлĕш валли урăхларах салат та хатĕрлеме вĕрентĕм-ха эпĕ, ал-урана çавăрса ярам-ха, çичĕ-сакăр кунтан как штык!

Митрахван мучи хальхинче çĕлен-калта салатне турĕ. Унта йыт пуллисем те кайрĕç.

– Тăван çĕр пуянлăхĕпе мĕншĕн усă курас мар? Америкăна, Канадăна, Корейăна кайса иличчен. Перекетлĕ, йӳнĕ, сĕтеклĕ.

Çĕлен какайĕ кăшт пылакрах, çавăнпа мучи ăна пăрăçпа, горчицăпа, ыхрапа, помидор сĕткенĕпе хутăштарса пăтратрĕ.

– Çи те çи! Мĕн экономика кризисĕ кунта. Европăри çĕр-шывсем, хăйсем выçă ларччăр.

Барак Обама валли кĕлет айĕнче тем чухлĕ шăши-йĕкехӳре. Пĕр чара пĕçерсе ăшалама хатĕр. Раççей халăхне выçăпа кам пăчлантарайтăр? Вăрман тулли вăрăм туна, чĕрĕп, пурăш … пирĕн. Акăлчансене, Канада халăхне тăрантарма пултаратпăр. Пирĕн çунатлă пĕчĕк кайăк çĕр чăмăрĕ çинчи пĕтĕм çын валли çителĕклĕ.

Ара, Украина пирки калаçаççĕ. Кама ĕненет-ха вăл? Америкăпа хутшăнса кайса ыр куратпăр тесшĕн-и малашне? Апат-çимĕçе тĕрлĕ консервант хутăштарса çинипе Америка çыннисем шыçмакланса кайрĕç вĕт, пăхма юрăхсăр. Пурте çăрхаланса утаççĕ. Пилĕкĕсем пачах çук. Чăваш, вырăс хĕрĕсене курăр-ха, вĕсем илемлĕ, йăрăс. Супăнь çинчи майрасем пек.

Элександр тете пахча умĕнче ларать. Верук аппа, арăмĕ – юнашар. Кĕçех вĕсем патне район хаçат редакцийĕнче ĕçлекен Катя каçрĕ.

– Верук аппа, – терĕ вăл, – эсĕ мана ĕнер легенда каласа парас кăмăллă пулнине систертĕн. Пуçлатăн-и?

– Юрĕ. Итле, хĕрĕм. – Эсĕ пирĕн ялтан ытла инçех мар Уçăп сăрчĕ, тенине илтнĕ-и?

– Илтнĕ.

– Апла пулсан каласа паратăп.

Уçăп çамрăк каччă пулнă. Муллă теейменĕн. Савнă хĕрне унăн тем пекех хаклă йышши куçлă çĕрĕ, хăлха çакки парнелес килнĕ. Анчах укçи-тенки çитмен.

Пĕринче Уçăп ял хĕррине кĕтӳ кĕтме тухать. Кăнтăрла выльăхсене шыв ĕçме тапăра антарать, çав хушăра вăл сăрт çине хăпарса анма шутлать. Мĕн туртать-ха ăна çавăнта?

Икĕ кун иртсен каччă каллех çавăнта çул тытать. Аллинче – тимĕр кĕреçе. Пĕр вырăнта вăл çĕр тикĕсех маррине асăрхать.

– Мĕн пулать те, мĕн килет? Чавса пăхам-ха. Çич-сакăр кĕреçе пек тăпрана ыватнă хыççăн Уçăп сăрт çамкинче темле япала пуррине сиснĕ. Каччă каллех чавать. Татах чавать. Чим-ха, мĕн ку? Арча-и? Чăнах та. Каччă тимĕр арчана çĕр ăшĕнчен туртса кăларать. Хуппине уçать те – туллиех ылтăн.

Шалта, ăшĕнчи ăна: «Уçăп ил ку ылтăна, пурнăçу пыл та çу пулĕ, малашне нихăçан та нушаллă пурăнмăн. Ил, ил, ылтăна никама та ан кăтарт, ху кăна усă кур», – тет.

Тата чунри: «Ылтăн санăн мар, вăл пуян Мĕтри Иванĕн мулĕ пулнă, ăна вăл хайĕн йăхĕ-тĕпĕ валли пытарнă, – терĕ. Халĕ эсĕ ăна пĕтĕм халăх усă курмалли çĕре кайса пар».

Мĕн тăвас? Уçăп тĕрлĕ шухăшпа асапланать. Ниçта кайса кĕме çук. Юлашкинчен вăл çĕр айĕнчи пурлăха вăрттăн аякри пасарсенче сутма пуçларĕ. Укçи-тенкипе чаплă тум-тир, апат-çимĕç туянчĕ, кермен лартрĕ. Юратнă хĕрне те кӳрентермерĕ.

Анчах пĕррехинче ăна çапса çумăр çунă чухне ылтăн тупнă тĕмеске çинче аçа çапса вĕлерчĕ.

Верук аппа та, Элексантăр тете те урăх чĕнмерĕç.

Катя çеç ăшĕнче: «Пуйма каякан вилсе килнĕ», – тени тĕрĕсех çав терĕ. «Çĕр панă, çĕр илнĕ», – тени те йăнăш мар иккен.

## Тăлăх-турат пуличчен

*Калав*

Санюк, мăшăрĕ Украинăра паттăрсен вилĕмĕпе пуçне хунине пĕлнĕ хыççăн, эрнипех вырăнпа выртрĕ. Ура çине тăма хал çук. Эх, вăрçă!

Çичĕ çулхи хĕр ачине кӳршĕсем илсе каçрĕç. Верук амăшне ан чăрмантартăр тесе шутларĕç пулмалла.

Саккăрмĕш кунне, уксахласа утакан Клавди, ял бригадирĕ, чӳречерен пырса шаккарĕ:

–Санюк, халех хире васка, тырра вăхăтра вырса пуçтармасан, е çумăрпа çĕрсе каять, е юр айне пулать.

Санюк ыраш çăнăхĕнчен пĕçернĕ пашалу, чăкăт илчĕ те уя васкарĕ.

Хĕрарăмсен хирте вилнĕ упăшкисем çинчен калаçма вăхăт çук: яра кун çыхнă кĕлтесен шутне Марук звеньевой тĕп-тĕрĕс çырса пырать. Хĕл лариччен инкесем тыр-пула пуçтарса кĕртрĕç. Йĕтем çинчи капансене хĕлĕпе çапмалли кăна юлчĕ. Мĕн тăвас тен?

Килте кĕпе-йĕм çума супăнь çук. Санюк аппа çапă, улăм кĕлĕнчен сĕлтĕ хатĕрлет, мунчара пуçа çума,ара.

Икĕ уйăх çурă шăрăхра, йĕпе-сапара нушаланса инкесен мунча кĕме те май пулмарĕ. Вăл кассипе те пĕрре çеç. Ăна урам хĕрарăмĕсем черетпе хутаççĕ, каçхине унта çирĕм-вăтăр çын таранах çапăнса-çăвăнса тухать.

Санюк аппа хĕр ачин çӳçне хачăпа илсе ячĕ. Шакла пултăр. Килĕренех пыйтă-шăрка пăхтараççĕ. «Верук, пуçа пăхкаласа ил-ха, тем кĕçĕтнĕ пек туйăнать», – теççĕ.

Верук черетпе хĕрарăмсен çӳçне ачашшăн тыткаласа, ерипен сире-сире, тимлĕн пĕчĕк «чĕр чунсене» шырать.

Верук ашшĕ Петĕр лайăх çынччĕ. Вăл килте нихăçан та ахаль ларма юратман: сухапуç купташкине майлатчĕ, выльăх-

чĕрлĕх пурине ыралатчĕ, савалатчĕ, тăррине те пĕчченех витетчĕ. Пахчине сухаланă, акнă, пуçтарнă. Вăрçăран таврăнаймарĕ вăл.

Санюк çуртне Петĕр çукран шыв анакан пулчĕ. Тăррине улăштарсах тăнă-ха. Анчах çĕрнĕ улăмне сирмесĕр çĕннине хурса тултарнин усси сахалтарах пуль çав.

Хĕрарăм çăкăр пĕçерес тесе кăмака хутса ярать те, çулăмĕ улăма ярса илмен-ши тесе, темиçе хутчен пӳрт тăррине хăпарса пăхать. Мăрье хăрăмне час-часах вăрăм шертене çĕтĕк-çурăкпа чĕркесе е мелкепе тасатса антарать.

Юлашки вăхăтра Верукăн куçĕ пăсăлма тытăнчĕ: йăмăхать, хĕрелет, пӳрленет. Ялти хвешăл патне кайса пăхтарчĕç те: «Трахома чирĕ, сиплес пулать ăна», – терĕ.

Верук аслашшĕсем патне час-часах кайкаласа çӳретчĕ, вĕсен ачи-пăчи йышлă, çăвăнсан пурте питне пĕр ал шăллипе шăлаççĕ. Пурте куç чирĕпе асапланчĕç.

Ун чухне ялта трахомăна пула район больницинче выртса сипленекен нумайччĕ. Куçа шур илсе суккăрланса юлнине те калатчĕç, ку чире вăхăтра сыватмалла иккен.

Çерук аппа, ялти сестра пекки, кашни кун Верук куçне эмел хурать, хутран-ситрен хăйĕн турчăка евĕрлĕ çутă инструменчĕпе хăрпăксене тавăрса пӳрлешкеллĕ шатрасене хыра-хыра илет. Ку нушана чăтса ирттерме – чĕр тамăк.

Тата мĕн тамаши? Кас хĕрарăмĕсем мунча хутаççĕ те килти ăпăр-тапăр япалисене каштаран çакса яраççĕ. Пăрçа ăшалаççĕ иккен.

Верук «пăрçа» сăмаха çимелли апат вырăнне хурать. Мĕнле ăнланмалла вара çакна? Пăрçа пĕрчине епле каштана çакса ăшалама пулать?

Амăшĕ хĕрне пăрçа çинчен тĕплĕн ăнлантарса пачĕ:

– Вăл вĕтĕ пыйтă евĕр тумтирте сиккелекен чĕр чун. Куçа та курăнсах каймасть. Хальлĕхе пăрçа пирĕн килте çук-ха, анчах чылай çын унпа асапланма пуçланă: «Питĕ ӳт-тире

кĕçĕттерет, çыртать. Чăтма май çук, –теççĕ. – Вĕри мунчара вилет пулмалла».

Хĕл ларать. Кӳршĕ-аршăсен çурта сивĕре хутса ăшăтма вутă çукпа пĕрех: урамра пĕр турпас татки курайман, çӳп-çап та выртмасть.

Санюксенчен виççĕ урлă пурăнакан Сахвине пăлтăр алăкне уçса кĕчĕ те куççульне шăлса:

– Санюк, эпир Ваççукпа шартлама хĕл сиввине чăтса ирттерейместпĕр пуль, тархасшăн, пире çуркуннеччен хăвăр патăрта пурăнтар, – тет.

– Пурăнăр, ара. Ваççук пĕчĕк ача мар. Миçе тултарчĕ-ха?

– Вун çиччĕре.

– Авланма вăхăт çитнĕ. Пĕр-пĕрне инкекре пулăшар ĕнтĕ.

Çапла каланă хыççăн амăшĕпе ывăлĕ Санюк аппасем патне пурăнма куçрĕç. Апат-çимĕçне пĕрле хатĕрлерĕç, сĕтел хушшине пĕрле ларса çирĕç.

Çуркунне çитеспе Сахвине Ваççука авлантарасси пирки сăмах хускатрĕ.

– Ывăлăм, – терĕ вăл, – эсĕ çамрăкне çамрăк та-ха, пирĕн пурнăç шутсăр кайттăм-кайттăм-çке, çурчĕ-йĕрĕ пур çĕртен те йăшать, çĕрет, ниепле ура çине тăраймастпăр. Сана авлантарсан аван пулмĕ-ши? – тетĕп.

– Хĕр травашĕ çук-ха манăн, анне.

– Ара, эпĕ пĕрне куçласа пурăнатăп-ха. Ахванеç Тимахвин Верукĕ вăл. Фермăра пăру пăхать. Ăна шутсăр ĕçчен, – теççĕ.

Сахвине ку шухăша Санюк аппана та пĕлтерчĕ.

– Ваççук, ара, туй пеккине те кăштах туса илмелле пуль апла? – ыйтрĕ хумханса Санюк аппа.

Амăшĕ ывăлĕ вырăнне:

– Пĕр-икĕ четвĕрт эрех туса чи çывăх тăвансене пуçтарса илсен тем пекехчĕ те. Чăн-чăн туйне тума пире çăмăлах мар çав: апат-çимĕçĕ чылай кирлĕ, вăй çитмест.

Сахвине кӗҫех эрех хурса лартрӗ. Эрнерен юхтарма тытӑнчӗ.

Аншарлийӗ виҫӗ четвӗрте яхӑн тухмалла пек. Юлашки хуранне ҫакса янӑ хыҫҫӑн йӳҫӗ шӗвек шӑнкӑртатса ерипен савӑта юхма тытӑннӑччӗ кӑна, – сасартӑк пӳрте виҫӗ милици килсе кӗчӗ.

Санюк та килтехчӗ.

Пӗр милиционерӗ тӳрех пӳрте ухтарма пуҫларӗ, арча хыҫне пытарса лартнӑ эрех савӑтне пӗр самантрах туртса кӑларчӗ.

Юлашкинчен виҫҫӗшӗ пӗрле акт ҫырчӗҫ те тулли сӑмакун четверчӗсене йӑтса тухса кайрӗҫ. Вӗсене икӗ хӗрарӑм ним каласа ӳкӗте кӗртеймерӗ.

Тепӗр кун Санюкпа Сахвине патне ял бригадирӗпе фронтран вӑхӑтсӑр тарса килнӗ Фрол васкарӗҫ.

Дезертирӗ тӳрех:

– Ну, Сахвине, лекрӗн тӗрмене, – терӗ лӗхлетсе савӑнӑҫлӑн. – Эсӗ ҫак куна курасса эпӗ тахҫанах кӗтнӗ. Мана качча тухмасӑр харама кайрӑн. Арҫуку та тыткӑна лекнӗ ав. Ун пирки калаҫмалла пулать пирӗн санпа. Юрӑхсӑр ҫын упӑшку.

Ҫапла каланӑ хыҫҫӑн иккӗшӗ те алӑка хыттӑн шаплаттарса тухса кайрӗҫ.

Суд пуличчен Сахвинене района чӗнтерчӗҫ. Милици укҫа парсан тӗрмерен хӑтӑлма май пурри ҫинчен систернӗ имӗш ӑна. Мӗн тумалла? Сахвинепе Ваҫҫукӑн вун тенкӗ те ҫук.

– Эй, турӑҫӑм, нивушлӗ амӑшӗпе ывӑлне хӑтарас тесе ӗнене сутса ярас? Вӑл пулмасан мӗн ҫиес? Яшкана шуратмалли те ҫук, – хурланса йӗрсе ячӗ Санюк.

Акӑ кил хуҫи хӗрарӑмӗ ула ӗнине ҫавӑтса пасара тухса утрӗ. Хирпе пынӑ чух выльӑха пуҫӗнчен ыталаса илчӗ те:

– Машук, янаварӑм, сана сутма каятӑп вӗт. Пире малашне кам тӑрантӗ? – тесе хир илтӗнмелле хыттӑн кӑшкӑрса йӗрсе ячӗ.

Национальная библиотека
Чувашской Республики
4-49031

Çапла вара Сахвине тĕрмерен хăтăлса юлчĕ.

Çулла. Хĕвел хĕртсе çунтарать, шăрăх. Санюк аппа колхоз ферминче пăрусене пăхать. Урок вĕçленнĕ-вĕçленменех Верук амăшне пулăшма васкать. Вăл кункăрасене курăк, силос хурса парать, шыв ярать. Выльăхсен хырăм айĕсене хыркăчпа тасатать. Каçхине Верук темшĕн хыçкаланма пуçларĕ. Аллисем çинче çуталса тăракан суран палăрать.

– Тимĕре вĕт ку! – терĕ амăшĕ хĕрне хĕрхенсе. – Пăруран ернĕ, халех ăна та сана та сиплеме тытăнмалла.

Амăшĕ Верук аллисене эмелпе сĕрсе, çитсă татăкĕпе çавăрса çыхса хуракан пулчĕ. Уйăх хушши тăсăлчĕ çак ерекен чир. Хĕрача аран-аран тимĕререн тасалса çитрĕ.

Верук çиччĕмĕш класа çитрĕ. Кĕнеке тытса вуласа ларма вăхăчĕ çук унăн. Ялан выçă хырăма тăрантарас тесе шутламалла, çавăнпа май килнĕ таран колхоз ĕçне хутшăнать. Ĕçкунĕ тăрăх çынсене кăштах тырă хушса паракан пулчĕç, ял халăхĕ тыррине арманта авăртса çăнăх, кĕрпе турĕ.

Верук шкулта. Санюк хĕл валли урана тăхăнма çăм нуски çыхса ларать. Сасартăк такам алăка шаккарĕ. Хĕрарăм ура çине тăрса та ĕлкĕрейменччĕ, – пÿрте Ахванеç кĕрсе тăчĕ.

Вăл хĕрĕхсене çывхарнă арçын. Вăйпиттискер, вăрçă чарăннăранпах ялта пурăнать, колхоз ĕçне çÿрет. Çемйи пур, виçĕ ача.

– Ну, Санюк, – тет савăнăçлăн, çуллă куçĕсемпе хĕрарăмăн кăкăрĕ çине сăнаса пăхса, – тăлăх арăм, арçыншăн тунсăхлатăн пулĕ, миçе çул ман пеккисене курманни?

Санюк малтан çухалса кайрĕ, чĕлхи те çĕтрĕ унăн, анчах хăй патне япшаррăн çывхарса килекен Ахванеçе мĕн шухăшпа çурта кĕнине чухласа илнĕ хыççăн - ăна сасартăках темле вăй кĕрсе кайрĕ. Хĕрарăм тĕпелте кăмака çумне тăратса хунă аварлă çатма тимĕрне ярса илчĕ те тÿрех Ахванеç енне сулса ячĕ, – лешĕ кутăн чака-чака картишне тухса вĕçрĕ. Арçын

ытларах Санюк куҫӗнчен хӑрарӗ, питӗ пысӑк курайманлӑхпа ҫисе яратчӗ вӑл Ахванеҫе.

Каллех Санюк ҫыхать, куҫҫуль тумламӗсем саппунӗ ҫине ӳкеҫҫӗ.

Кӗр ҫитрӗ. Ял халӑхӗ колхоз уйӗнче ҫӗр улми кӑларать. Верук шкултан килнӗ хыҫҫӑн килти пахчара тӑрмашать акӑ.

Икӗ эрне хушшинче хӗрача ҫирӗм пилӗк соткӑри ҫӗр улмине йӑлтах кӑларса пӗтерчӗ те амӑшӗ ӗҫрен таврӑннӑ ҫӗре мунча хутса ячӗ, тутлӑ апат пӗҫерчӗ.

Пахча-ҫимӗҫе тӗп сакайне пуҫтарса тирпейлесен Санюк яланах автан пусать.

– Хӗрӗм, тӑраниччен ҫи, – тет, амӑшӗ ун пек чухне ачине. – Акӑ вӑрлине тыт, вӗҫсе кайма – ҫунаттине. – Хӑй автанӑн ҫӑтӑр-ҫатӑр шӑмми-шаккине ӗмме юратать.

Колхоз уй-хирӗнчи ӗҫ-пуҫа вӗҫленӗ хыҫҫӑн бригадир ял ҫыннисене пӗр кун кантарса илме шутларӗ.

Санюк нуски ҫыхать, йӗпписене вылянтарать кӑна, юнашар ялти тутарсем алса-чӑлха ҫыхма ҫӑм парса хӑварчӗҫ ӑна, ӗҫне туса пӗтерсен кӑштах укҫа пама пулчӗҫ. Ҫыхсан-ҫыхсан хӗрарӑм тарӑн шухӑша кайрӗ.

Пилӗк-ултӑ ҫул каялла хуралтӑсене ҫӗнетес шутпа вӑл Улатӑртан машинӑпа вӑрӑм пӑрӑссем тиесе килнӗччӗ. Вӗсене пӑчкӑпа заводранах тип-тикӗс тӑваткӑлласа касса-якатса тирпейленӗччӗ. Сухӑрлӑ материала курсан касри пӗтӗм ҫын тӗлӗннӗччӗ.

– Ай-ай, ӑҫтан туянтӑн кусене? – текен тем чухлӗччӗ.

Пӑрӑссене ӗҫе кӗртес тесен каллех вӑл та, ку та кирлӗ. Апат-ҫимӗҫне хатӗрлемелле, сӑрине тумалла. Ҫынсене ӗҫ тума епле нимсӗр пуҫтарӑн.

Пӗр ирхине Санюк вӑрӑм витене кӗчӗ те – шартах сикрӗ. Пӑрӑссем ӑҫта? Унталла - кунталла пӑхкаларӗ, ниҫта та нимӗн те курӑнмасть. Хӗрарӑм хуралтӑ хыҫӗсене сӑнакаласа ҫӳрерӗ, аяккарах та кайса пӑхрӗ, – ҫук. Вӑрласа кайнӑ пулас . Кам-ши?

Ирхине кĕтÿ хăваларĕ вăл. Каялла килнĕ чухне кÿршĕ хĕрарăмне юмăç карчăкĕ патне çитсе килме шут тытнине каларĕ. Мĕн пулать те, мĕн килет. Халиччен Санюк юмăçсем патне кайса курманччĕ.

Аякри яла çул тытрĕ вăл.

Юмăç ăна кĕнĕ-кĕменех:

– Сирĕн килте вăрăм япала çухалнă, – терĕ, – халĕ çавă тĕттĕм çĕрте выртать, хăвăртан инçех мар, сулахай е сылтăм енчен икĕ-виçĕ кил урлă çеç. Тупăнать. Пырса хураççĕ.

Карчăк хĕрарăмран пĕр çаврашка çăкăрсăр пуçне урăх нимĕн те илмерĕ.

Санюк киле çитсе салтăнчĕ те хуралтă хыçне тухрĕ. Пăхать: умра тем çÿллĕш пĕр купа вутă выртать, ăна кĕп-кĕскен касса-çурса хатĕрленĕ. Хĕрарăм вутта çакăн пек перекетлĕ хутса çунтаракан пĕр урамри кил-йыша тÿрех тавçăрса илчĕ. Кÿршĕсене: «Пăрăссем тупăнчĕç», – терĕ те çавăнпа çырлахрĕ.

Сахвитпе Кириле ял хĕрринче пурăнаççĕ. Хĕрĕсем ÿссе çитĕннĕ, Сима хĕрĕ качча кайса нумай пурăнаймарĕ, иккĕмĕш ачине çуратсан упăшкинчен уйрăлчĕ те каялла килчĕ. Халь ашшĕпе амăшĕ патĕнче пурăнать.

Кириле кĕрнеклĕ арçын, пичĕ çуткам, яка, пĕр пĕрĕм те курăнмасть. Хĕрĕсене ачашласа-юратса ÿстерет вăл. Анчах вăрçăра вилнĕ салтак арăмĕсене курсан автан пек хăпартланса каять:

– Ай, Кĕçени, мĕнле пулма пĕлнĕ эсĕ кун пек, – тет, – урусем ытармалла мар. Кăкăрусем тулли, кил-ха…

Лешĕ:

– Намăссăр арçын, питне кĕççе çĕленĕ, халех арăмна каласа паратăп, – тесен çеç арçын пăрăнса утать.

Верук вăтам шкултан вĕренсе тухрĕ те Шупашкара педагогика институтне вĕренме кĕчĕ. Учитель пулас килет унăн.

Санюк килте пĕчченех.

– Каçхи апат тăвам-ха, – тесе çĕр улми шуратма ларчĕ.

Унччен те пулмарĕ – çенĕк алăкĕ яри уçалса кайрĕ, пӳрте Кириле кĕрсе тăчĕ. Хăйĕнчен эрех шăрши кĕрет. Санюк сиксе тăма ĕлкĕриччен вăл алăка шал енчен питĕрсе илме ĕлкĕрчĕ.

Ун хыççăн:

– Санюк, эпĕ сана тахçанах юратса пурăннă, Сахвитпе эпĕ ытахальтен кăна, – терĕ те çирĕп аллипе хĕрарăм пилĕкне çавăрса илчĕ. Санюк Кириле ытамĕнчен вĕçерĕнес тесе пĕтĕм вăйран турткалашать, ăна сăмсинчен чĕрнипе чавса илчĕ: «Яр, яр – тетĕп сана!» тесе урипе пĕçĕ хушшинчен хытах тапрĕ.

Сасартăк Кириле хутланса ларчĕ, йынăшса илчĕ. Ура çине аран тăчĕ те:

– Санюк, каçар мана! – тесе пӳртрен васкаса тухса кайрĕ.

Ял хĕрарăмĕсем пĕве айккинче кантăр тыллаççĕ. Сахвит хушăран Санюк çине пăхса илет. Кириле Санюк патĕнчен хыçалти хуралтă алăкĕнчен тухса кайнине Карачăм курнă, тет. Вăл хăй мĕн асăрханине арăмне каласа кăтартать. Маруç – Сахвите.

Сахвит хăрах куçлă хĕрарăм. Чĕлхи вут вĕтет, ăна çĕр çинче пĕр хĕрарăм та вăрçса-тавлашса çĕнтерес çук. Чарусăр терипе чарусăр.

Сахвит колхоз ĕçне ăнсăртран пĕрре кăна тухкалать, кăшт-кашт хыпар пĕлкелемелле.

Кунта вăл чăнласах кантăр тыллама килнĕ тетĕр-и? Ячĕшĕн кăна.

Унăн пĕр кирлĕ ĕç тумалла. Хĕрарăмсем каç еннелле киле пуçтарăнчĕç. Пĕрисем кӳмери ачисене тирпейлесе вырттарчĕç, теприсем алли-урисене çуса тасатрĕç. Сахвит çав хушăра хăйĕн хутаçне икĕ хутăр сӳс майласа чикрĕ, çакна асăрхакан никам та пулмарĕ.

Тĕттĕм каç. Тӳпене пĕлĕтсем хупланă. Сахвит йĕри-тавра пăхкаласа: «Никам та асăрхамасть-ши?» – тенĕн Санюк çурчĕ патне утать.

Çитрĕ. Кантăр сӳсне меллесе çенĕк алăкĕ умĕнчи крыльца айне чиксе хучĕ, каялла çав çулпах кайрĕ.

Кăнтăрла иртсен бригадир Санюка хиртен яла анма хушрĕ, мĕншĕнне каламарĕ.

Санюк кил умне çитрĕ.

Картишĕнче ăна икĕ милиционер, бригадир, ял совет председателĕ кĕтсе тăраççĕ. Хăйсем хĕрарăм патне мĕншĕн килнине пĕлтернĕ хыççăн милицисем вăрласа килнĕ кантăр сӳсне шырама тытăнчĕç, пĕри пӳрт маччине хăпарса кайрĕ, хуралтă тăррине те тустарам пекки турĕ, юлашкинчен крыльца айĕнчен «ăнтан кайса шыранă» япалана вĕлт! çеç туртса кăларчĕç.

Санюк сӳсе курсан тĕлĕнсех кайрĕ. Ăçтан? Епле майпа лекнĕ вăл кунта?

Каллех акт çыраççĕ, каллех района чĕнеççĕ. Хупса лартассипе хăратаççĕ.

Допросра Санюк: «Эпĕ нимĕн те пĕлместĕп, вăрламан», – тенисĕр пуçне пĕр сăмах та калаймарĕ.

Таруççа ирех вăранчĕ, тем ăш вăркать.

Сахвит Санюк картишне хыçалти алăкран хутаç йăтса кĕнине асăрханăччĕ вăл. Ун чухне Таруççа хăйĕн упăшкине шырама тухнăччĕ, Ванюкĕ кăшт хĕрĕнкĕччĕ те: «Таçта Санюк патне кайса çапăнман-ши?» – тесе шутларĕ. Шăплăха чылай итлесе тăчĕ.

Сахвит Санюк картишне ырă ĕçпе кĕменнине сисрĕ Таруççа. Мĕн тесен те ахаль çӳремест. Усал ĕç тăвасшăн пуль.

Санюка милицисем района чĕнтернине илтсен Таруççан чĕри кăлт! туса илчĕ.

– Пĕтереççĕ вĕт салтак арăмне, мĕскĕне, – сасăпах каласа хучĕ хĕрхенсе.

Акă вăл çула пуçтарăнчĕ.

– Каласах пулать тĕрĕсне. Тăлăх арăм хутне кам кĕтĕр? Йăлтах каласа паратăп. Санюкăн пуçне çитермелле-и вара? Хуйхи-суйхине капла та сахал мар тӳсрĕ.

Хӗвел тухнӑ. Хирте тӑрисем юрлаççӗ. Таруççа çуранах района утать, çулӗ çывӑх мар, вун сакӑр çухрӑм çуран утмалла.

Хӗрарӑм савӑнăçлӑ. Кӗçех милици çуртне çитӗ те:

– Санюк вӑрӑ мар, тӳрӗ чунлӑ çын, – тейӗ.

Таруççапа Санюк яла таврӑнаççӗ. Вӗсене милици машини хӑваласа çитрӗ:

– Васильева, Сергеева, ларӑр кабинӑна, яла çитерсе хӑваратӑп, – терӗ водитель кулкаласа.

Санюк кӑмӑлӗ çемçелчӗ: вӑл хӑй таврашӗнче ырӑ чунлӑ çынсем пуррине асӑрхарӗ.

– Пурӑнатпӑр-ха, хӗрӗм, – терӗ хӗрарӑм ӑшӗнче хавхаланса.

## Таврăну

*Калав*

Арифметика урокĕ. София Петровна виççĕмĕш класра вĕренекенсене пĕр евĕрлĕ примерсене епле шутламаллине ăнлантарать.

Тĕрлĕ ача пуçтарăннă кунта: куçаймасăр пĕр класра лараканни иккĕн, шкап тăррине хăпарса ларса урайне тăррăс! сикекенни те пур. Çулĕпе вĕсем ыттисенчен чылай аслăрах. Илюшăн ашшĕ вăрçăра хыпарсăр çухалнă, Костьăн пачах çук.

Вĕренӳре ăнăçлă ĕлкĕрсе пыраканнисем хушшинче – Петров Толя, Андрева Люда. Вĕсем кирек мĕнле задача-примера ăсра шутлаççĕ.

София Петровна партăсен хушшипе утса çӳрет:

– Костя, аннӳ кӳршĕсенчен пĕр кĕрепенкĕ çăнăх, икĕ кĕрепенкĕ çăкăр кивçен илнĕ тейĕпĕр, кайран вĕсене мĕн чухлĕ тавăрса памалла-ши? Кала-ха.

– Мĕншĕн тавăрса памалла вара? Тата тăватă кĕрепенкĕ çăнăх илсе каçмалла та, – пулчĕ, – терĕ лĕхлетсе Костя.

София Петровна çӳлĕпе çамрăк мар. Пурнăçра ыррине те, усаллине те курчĕ вăл. Ку ачасенчен мĕн тĕлĕнмелли? Хаяр нимĕç вăрçине пула вĕсен парта хушшинче тĕпленсе вĕренсе ларма ниепле май пулмарĕ. Хĕл кунĕсенче çӳхелсе кайнă сăхманпа, çăпатапа çӳретчĕç, хăш чухне уринчен пушмакĕсем тухса ӳкетчĕç, тытăнки пачах çукчĕ. Тăхтавра хăшпĕр вĕренекенĕн чĕре сури тумалăх çăкăр, пашалу татки те пулман. Пĕр-пĕрин пур-çук çĕр улми турамĕ е крахмал икерчи çине сĕлекине юхтарса куç илми пăхса ларатчĕç. София Петровна ун пек чухне хырăма чăрлатма чарас шутпа сумкана чикнĕ улма пӳремечне вĕренекенсене кутăн ларса çиетчĕ.

– София Петровна, тула тухма юрать-и? – тесен Катя шартах сикрĕ.

«Юрать» тенине кĕтсе иличченех Веня хăйĕн шалпар йĕмне, анса каясран хăранă евĕр, икĕ аллипе пилĕкрен çӳлĕрех çĕклесе урама ыткăнса тухрĕ. Тепĕр виçĕ минутран аçа-çиçĕм пек васкаса кĕчĕ те:

– Пушар! Сидоровсем çунаççĕ! – терĕ кăшкăрса.

Час-часах камитсем кăтаркаланипе София Петровна ачана ĕненсех пĕтереймерĕ.

– Пушарпа шӳтлемеççĕ, – тенисĕр пуçне пĕр сăмах та тупăнмарĕ унăн. Анчах вĕрентекен хăвăрт урама чупса тухрĕ.

Лидюк аппан çурчĕ урăм-сурăм çунать, çулăмĕ пĕлĕте çитнĕ. Урам тăршшĕпе ял халăхĕ витресемпе унта-кунта чупкаласа пусăсенчен шыв кăларса йăтаççĕ. Пурте пушара сӳнтересшĕн.

Çирĕм минут хушшинче çурт вырăнĕнче кĕл купи çеç тăрса юлчĕ. Пушарĕ мĕнрен тухни те паллă: кăмака умĕнчи каштара ăпăр-тапăр япаласем çакăнса тănă, çынсем вăрçă чарăнсан та пӳртсене улăм-хăмăлпа хутса ăшăтатчĕç, апатне те унтах пĕçернĕ. Каланккана çунтарнă май куç илмесĕр сыхламаллаччĕ, кăварĕ урайне ӳксен хăмана хыпса илетчĕ.

Лидюк аппа ĕçрен таврăнать те: «Çĕнĕ улма кăларса кĕрем-ха», – тесе пысăк пахчана тухать. Çĕр улмипе чакаланнă хушăра…

Хăмăлĕ мачча çинче пулнă çав.

Сентябрь уйăхĕ. Çынсем уйра тырă пуçтараççĕ. Лидюк аппан ăçта кайса кĕмелле? Пурăнма нимĕн те çук. Икĕ ача тата. Вĕсене мĕн çитермелле? Мĕн тăхăнтартмалла?

Катя виççĕмĕш класра вĕренет, шăллĕ, Гриша виçĕ çулта. Упăшки пирки кăшт каярах.

Пĕр урамра, Лидюк аппасенчен аякрах мар, чалăшра, кас леш енче Çимун Кулисем пурăнаççĕ. Унăн амăшĕ туберкулезпа чирлесе вăхăтсăр çĕре кĕнĕ, ашшĕ вăрçăра çапăçса куçне хупнă. Çунса кайнă кил-йыш çавсем патне

куçрĕ. Кулясен икĕ пӳртчĕ, пĕри – пуш-пушах. Лидюк аппа сыснине вĕсен витине ячĕç, ăна пушартан хăтарса хăварнă иккен. Тата тӳшек-çытар тăрса юлнă.

Сахвит аппа – Кулян амăшĕпе пĕр тăванĕ. Вăл каç пулсан Лидюк аппа çемйине хĕрхенсе: «Пушă пӳртре мĕнле çĕр каçмалла? – Кинне: Халех пирĕн пата илсе каç, – тет. – Хăйсене тăлăх ан туйччăр».

Гришăпа Катя урайĕнче выртаççĕ.

Лидюк аппа хăйĕн çунса кайнă çурт вырăнне юлать. Вăл: «Эпĕ унтах çĕр каçатăп,» – тенĕ пулать.

Сахвит аппа:

– Лидюк ăçта? – тет. – Кин, ăна пĕччен хăвармалла марччĕ, Катьăпа иксĕр хăвăрт каçса илĕр, – тет.

Валянти аппапа Катя çурт вырăнне çитеççĕ те, Лидюк аппа сăпкаункинчен юпа çинче çакăнса тăнине кураççĕ.

Валянти аппа ăна çĕклесе илсе мăйкăчран пушатать. Çакăннă хĕрарăм хăрлатса: «Шыв, шыв», – теме çеç пултарнă. Вилсе ĕлкĕреймен.

Вĕрлĕк каштасем витĕр каçса Лидюк аппана Сахвит аппасем патне илсе çитереççĕ.

Урамра çап-çутă. Çунса пĕтеймен хуралтă тамаланма пуçланă иккен, каллех çынсем шыв сапаççĕ.

Сахвит аппа куçĕ курмасть, суккăр. Вăл тăрăшсах турă кĕлли вулама пуçлать.

Лидюк аппа куççульпе йĕрет.

– Ĕнтĕ тăлăх ӳсрĕм, тутарсене çăм арла-арла парса, чăлхануски çыхса шăллăмсене ӳстертĕм, упăшка пăрахса кайрĕ, çунса кайрăм, тĕрме курмалли кăна юлчĕ манăн. Çапах та çын патĕнче пурăнас марччĕ, тăм витене майлаштарса çурт тăвасчĕ-çке.

Акă, çунса кайнăскере, колхоз улăм парать. Хĕрарăм вите тăррине витсе пурăнма юрăхлă çурт туса лартнă. Пăлтăрне татăк-хĕсĕк хăмасенчен çапкаласа чăхсемпе сысна усрама тытăннă.

Ял-йыш: хăшĕ-пĕри пĕр чĕлĕ çăкăр, тепри тутăр-саппун таврашĕ пырса парать. Кĕрхи ĕçсене вĕçленĕ хыççăн виçĕ михĕ тырă илсе çитерчĕç. Тыррине михĕрен пушатмасăрах Катя амăшĕ Çимун Кулясен кĕлетне кайса хучĕ. Вырттăрах ларта.

Ял совечĕ çунса кайнă çынсене хĕрĕх кубометр вăрман пама йышăннă. Лидюк аппа ăна каярах, каснăскере, сутса хатĕр çурт туянать, вăрман çĕрĕнчен куçарса килнĕскер ĕнтĕ вăл.

Катя:

– Анне пире: «Çынсем пекех пӳрт те лартăпăр, тырă пур, выçă лармăпăр-ха, вăрман та пачĕç», – терĕ.

Лидюк аппа çунса кайнă хыççăн кӳршĕ республикăри Дрожжаново тăрăхне, упăшки авланнинине пĕлсе, çитсе курма шутларĕ.

– Эпĕ ăçта кайнине никама та ан калăр, ачамсем, – тет. – Матрюн аппасем патне Катеке вĕçтернĕ, тесе калăр, – тет.

Пĕр-икĕ каçран Лидюк аппа киле каялла çаврăнса çитрĕ. Вăл урамра вылякан ачисене чĕнсе илсе:

– Маттурсем, кĕрĕр-ха, аçăр чăн та урăх хĕрарăмпа пурăнать. Пӳртĕнче виçĕ çулхи ача чупса çӳрет. Катя, ывăлĕ сан сăнлах, – тет.

Çакна илтсен Гришăпа Катя йĕрсе яраççĕ:

– Анне! Мĕншĕн ачине вĕлермерĕн?

– Эй, айвансем, тур сыхлатăр! Вăл пурне те курса тăрать. Сывлăх çеç пултăр, пурăнăпăр-ха, çылăха кĕрес мар.

Тепĕр эрнерен Çимун Кулисен умне такамсем лашапа килнĕ, Лидюк аппана чĕнсе тухрĕç. «Эсир ку тырра вăрласа килнĕ», – терĕç те каялла турттарса кайрĕç.

Кĕлетсен хуçи, Толя тете, хутла пĕлмен çын пулнă. Ял çыннисем Лидюк аппана пулăшса панă тырра вăл никама та алă пустарман иккен. Хĕрарăмпа пĕр тăван шăллĕ, Катьăпа Гриша куккăшĕ, çав вăхăтра ял совет председателĕнче ĕçленĕ. Унăн ĕçре тĕрлĕ ыйтусене татса панă май тăшманĕсем

тупăнма пуçланă. Ниепле те пĕр çын çĕр çынна юраса пĕтереймен.

Макар Хĕвекли Лидюк аппа тырри пирки район прокурорĕ патне кайса каласа парать.

Кĕçех кĕлетсене пломба лартрĕç. «Ревизи тумалла», – теççĕ.

Колхоз председателĕ юнашар ялтанччĕ, Самаркин хушаматлăскер. Вăл Лидюк аппа патне кĕрсенех:

– Лидюк, кĕлетре тырă шучĕ тухмасса пултарать, тархасшăн, çитменнине ху çине ил-ха, ачусем пĕчĕк, упăшку пăрахса кайнă, хальтерех тата çурту çунса кайрĕ, сана тĕрмене лартмаççĕ, – терĕ тарăннăн сывласа илсе.

– Акă аннене чĕнме пуçларĕç, – аса илет Катя хĕрĕ. – Толя тетене тӳрех тĕрмене хупрĕç. Тăваттăмĕш хутĕнче анне киле таврăнмарĕ. Кĕтетпĕр, кĕтетпĕр, çук. Унпа пĕрле района кукка та кайнăччĕ. Вăл та таврăнмарĕ-ха.

Гришăпа урама тухрăмăр, анне ури сассине тăнлатпăр, никам килни те курăнмасть.

Сасартăк кăххăм! туни илтĕнчĕ. Кукка юра кăчăрт-кăчăрт! тутарса ухсахласа утать. Вăрçăра çурăм шăммине, урине амантнă унăнне, инвалид. Кукка пире ыталаса илчĕ те:

– Атьăр, киле кĕретпĕр, унта сире йăлтах каласа паратăп, – терĕ.

Унран аннене тĕрмене хупса лартнине пĕлтĕмĕр.

Катя куккăшĕ Иван ятлă, ăна ялти çынсем пурте Иван Михайлович тесе чĕннĕ. Пултаруллă çын пулнă вăл, шут ĕçне ăста, ӳкерме, юрлама юратнă. Кĕнеке вуласа тăтăшах пĕлĕвне ӳстернĕ. Мăшăрĕпе икĕ ача ӳстернĕ. Митя çулталăкри ача пулнă ун чухне.

Иван Михайлович Сăпани йăмăкне Катьăпа Гриша патне ярать. Лидюк аппа таврăниччен вĕсене пăхма хушать.

Сăпани – качча кайман çитĕнсе çитнĕ хĕр.

Лидюк аппа тĕрмере дояркăра ĕçлет. 1955 çулхи март уйăхĕнче яла суд тума килесси çинчен систереççĕ. Малтан колхоз правленине пĕлтернĕ кун пирки.

– Катя, Гриша, аннĕре илсе килеççĕ, тăхăнăр, хирĕç чупăр, – тет васкаса Сăпани аппăшĕ.

Виçĕ лав çын. Димитриев Толя тете, Лидюк аппа уйрăм çунасем çине ларнă. Яла кĕчĕç, милиционерсем лашисене чуптараççĕ. Гришăпа Катя çунасем хыçĕнчен:

– Анне, анне! – тесе кăшкăрса чупаççĕ, вĕсене çывăха яхăнне те ямаççĕ.

Акă амăшĕ ачисене пĕр катăк сахăр персе парать, вăл çывăхри кӳлленчĕке ӳкет. Гриша сахăра илчĕ те çуррине çисе ячĕ, ыттине аппăшне пачĕ.

Суд пырать. Лидюк аппа счетовод Макçăм пӳлĕмĕнче. Унта ачасене амăшĕ патне пĕр кун иртнĕ хыççăн анчах йăпăртлăха кĕртсе илчĕç.

Лидюк аппа Катьăпа Гришăна пуçĕсенчен ачашлать, ыталаса:

– Ачамсем, мана хупмаççĕ, ан пăшăрханăр, – тет. – Хăйĕн куçĕнчен куççуль юхать.

Суд икĕ кун пычĕ. Пĕтĕм ял халăхĕ Лидюк аппа майлă, прокурорпа заседательсем çине кăшкăраççĕ. Макар Хвеклин упăшки, Миккуль, колхоза пысăк парăма кĕнĕ пулнă иккен. Укçине арăмĕнчен тытса пыма пуçланă, Иван Михайлович пухура парăм пирки каланă. Çакăн хыççăн хĕрарăм ял совет председательне курайми пулать, унăн инкекне тӳсекен – Лидюк аппа.

– Тепĕр кунне суд Толя тетене вунă çула, куккана сакăр çула, аннене ултă çула тĕрмене ямалла турĕç.

Катьăпа Гришăна суд хыççăн тăлăх ачасен çуртне парасшăн пулнă, Сăпани аппăшĕ ачисене хăй пăхма килĕшнĕ.

Ашшĕ, Карачăм, Лидюк аппана тĕрмене лартнине пĕлсен Гришăна хăй патне илсе каять, ывăлĕ виçĕ çул Ульяновскинче

пурăнса, вырăсла калаçма вĕренсе çитнĕ, шăкăлтаттарать кăна, сутса ярать.

Амăшне кассаци хыççăн пĕр уйăх хушши ялта пурăнма ирĕк панă. Кайран вара ăна салтак пек тĕрмене ăсатнă. Çынсем ял вĕçне тухнă. Лав çине çăкăр, çĕр улми, хутаçпа çăмарта параççĕ. Катьăпа Гриша хыçран чупса пырса юнашарти Катек ялĕ патнех çитнĕ. Милици лашине хытă хăвалать. Лидюк аппа пĕтĕм апат-çимĕçне ачисене ывăта-ывăта парса хăварнă.

Хĕрарăм – тĕрмере. Начальник ăна пĕр пӳлĕмре вăтăр çынна яхăн выртса тăракан çĕре пырса ярать. Малалла вара надзиратель аллине лекет.

Кунта ытларахăшĕ – вырăссем, тутарла калаçакансем те пур, чăвашран виçĕ хĕрарăм.

Пĕр эрнеренех Лидюк аппа тĕрме пурнăçне хăнăхса çитет, килти пекех ир-ирех тăмалла унăн, ĕнесен айĕсене улăштарса сармалла, апат панă хыççăн алăпа сума пуçламалла. Ир те каç ултă ĕнене сăвасси йăлана кĕнĕ, хырăм айĕсемпе урисене вăхăтра тасатса тăрать. Çиллисене ăшă шывпа тап-таса çунă хыççăн çемçетме çу сĕрет.

Хĕрарăм хăй выртса тăракан вырăнне пуçтармасăр, арăш-пирĕш нихăçан та пăрахса хăвармасть. Урайне колонире черетпе çăвaççĕ, Лидюк аппашăн ку ĕçе тăвасси пачах та йывăр мар. Пушă вăхăтра ĕçлесе илнĕ укçаран пĕрре виççĕмĕш пайне яла Гришăпа Катя валли уйăхра пĕрре посылка ярса тăрать. Унта – кĕпе-йĕм, тутăр таврашĕ, нуски-чăлха.

Ĕçре малта пыракан дояркăна тӳрех асăрхаççĕ, вăл грамотăсем илме тивĕç пулать. Тĕрмере ларнă хушăра Лидюк аппа çурт лартмалăх укçа пуçтарать.

Гришăпа Катьăн амăшĕ хальхи Тутар Республикинче хĕрарăмсен колонийĕнче ларнă.

Виçĕ çул иртсен ĕне суса ларнă чухне надзиратель кĕрет те:

– Сана тӗрме начальникӗ чӗнет, – тет.

Лешӗ кӗнӗ-кӗменех:

– Мускавран хут килнӗ, пӗр талӑкран пуҫтарӑнса хӑвӑртрах киле кай, – тет.

Толя тетепе Иван Михайлович та Сталин сакунне улӑштарнӑ хыҫҫӑн ирӗке тухаҫҫӗ.

Лидюк аппана тӗрмене ҫуркунне ҫӗр улми лартнӑ вӑхӑтра илсе кайнӑччӗ, кӑларнӑ чухне вӑл ирӗке тухнӑ.

Катя ҫав вӑхӑтра шкулта тӑхтавра урока хатӗрленсе ларнӑ, Сӑпани аппӑшӗ класс алӑкне яри уҫса ярать те савӑнӑҫлӑн:

– Катя, аннӳ килнӗ! – тесе пӗтӗм вӑйран кӑшкӑрать. Хӗрача ҫил пек килне вӗҫтерет. Лидюк аппа майралла тӑхӑннӑ, кӗпи ятуллӑ, сӑнӗ-пичӗ илемленнӗ. Вӑл Катя мӑйне шушкӑ ҫыххи ҫакса ярать те:

– Класри ачасене пурне те салатса пар, – тет.

Учительсем уроксем вӗҫленнӗ-вӗҫленменех Лидюк аппана курма васкаҫҫӗ.

## Телейлĕ ачалăх

*Калав*

Эпĕ вăрçă хыççăн çичĕ çултан çуралнă.

Ялти çуртсем эп астăвасса пурин те пĕр евĕрлĕччĕ, тăррине улăм витнĕ, касра пĕр шатрун пӳрт кăначчĕ. Хапхасем вырăнне вĕрлĕк каштаччĕ, çын урама тухни-кĕни пăхнă-пăхманах курăнса каять.

Çулла. Манăн урара çутă калуш. Эпĕ унталла-кунталла пăхкаласа çӳретĕп. Акă пĕр енчи кӳршĕсен карта тытман пĕчĕк пахчине сăнаса пăхрăм та – куçа хĕрелнĕ хăмла çырли курăнса кайрĕ. Чăтаймарăм, утса пырса алла тăсрăм. Пилĕк-ултă çырла татса ал тупанне хутăм.

Унччен те пулмарĕ: «Намăссăр хĕр ача, çырла вăрлатăн-и? Вĕлеретĕп сана!» – тени илтĕнсе кайрĕ.

Эпĕ хăранипе тӳрех килелле тапса сикрĕм. Йăпăртах хуралтă тăррине хăпарса кайрăм та пӳрт çамкин хыçалти хутлăхне пытанса лартăм. «Кунта мана никам та шыраса тупаймасть,» – тесе шутлатăп хам.

Пилĕк минут иртрĕ-и, çук-и, – хуралтă тăрринче кӳршĕ хĕрарăмĕ тăрать. Мана асăрхарĕ те, тимĕр сенĕкне малалла кăнтарса: «Лекрĕн-и, халех чиксе вĕлеретĕп сана! Хырăмна çуратăп, пыршу-пакартуна кăларатăп!» – тесе кăшкăрать.

Çерук аппан усал куçĕсене эпĕ яланлăхах астуса юлтăм.

Мăнкун çитиччен пĕр-икĕ эрне маларах килсерен пӳрт ăш-чиккине çума пуçларĕç, ниçта пĕр хура пăнчă та хăвармаççĕ. Анне, ăна ялта Марче тесе чĕнетчĕç, мана çырма пуçĕнчен витрепе юр шывĕ йăттарать.

Хĕвел пăхать, шăнкăрчсем юрлаççĕ, урамра шăнкăр-шăнкăр шыв юхать. Эпĕ хура кайăксен хитре юррине ытараймасăр итлетĕп.

Каҫхине мунчана кайрӑмӑр, кӳршӗ-аршӑсемпе пӗрле ҫӑвӑнатпӑр. Анне: «Мӑнкун ҫитет вӗт, хӗрӗм, ҫан-ҫурӑмна мунчалапа ҫуса ярам-ха, – тет, – ай-ай, аллусем чип-чиплӗ, тӑмпа вылятӑн пуль ҫав».

Унтан Марук аппа такмакла-такмакла пире, вӗтӗр-шакӑра, милӗкпе ҫапма тытӑнчӗ. Сӑмахӗсене халӗ те астӑватӑп-ха.

Лӑпӑс-лӑпӑс милӗкӗ,
Тӑпӑл-тӑпӑл пилӗкӗ.
Ай, мунчашӑн мар-и ҫак?
Ҫат-ҫат! Ҫат-ҫат!
Пыйти-шӑрки ан юлтӑр,
Мӑнкун мунчи ҫак пултӑр,
Ҫат-ҫат! Ҫат-ҫат!

– Ленук, – ыран пирӗн пата ҫӑмарта пухма каҫ вара, юрӗ-и? – тет Кӗтерук аппа. – Аннӳ ҫӗнӗ кӗпе ҫӗлесе пачӗ пулӗ-ха.

– Ӑхӑ, – тетӗп ӑна. Кӗпине темиҫе хут та тӑхӑнса пӑхрӑм ӗнтӗ эпӗ. Чечеклӗ вӑл.

Шестикленка тенӗ ҫакнашкал вӑр! ҫаврӑнакан кӗпене. Мӑнкунне куҫ пек кӗтнӗ вара. Мӗн тери пысӑк уявччӗ вӑл вӗтӗр-шакӑршӑн.

Акӑ ирех вӑрантӑм та Мӑнкун ҫӑмарти пуҫтарма хресна нне патне вӗҫтертӗм. Вӑл кӗнӗ-кӗменех:

– Ирт, хӗрӗм, маларах, сана минтерпе тенкел ҫине лартам-ха, эс питӗ лӑпкӑ, пусма ларакан хур мӑнкун кунӗ малтан пырса кӗрекен пек пулать, – тет, – кунӗ пулӗ-ха, чӗпписене лайӑх кӑларӗ.

– Ним калама та аптӑрарӑм, енчен те чӗпписем тухмасан эпӗ айӑплӑ пулатӑп ӗнтӗ, тетӗп ӑшӑмра.

Хресна нне аллӑма пӗр ҫӑмарта, йӑвача, хӑй ҫӑрса пӗҫернӗ икӗ пӗремӗк, виҫӗ-тӑвата канихвет тыттарчӗ. Эпӗ савӑннипе ниҫта кайса кӗрейместӗп. Тӳрех анне патне вӗҫтерсе ҫитрӗм те Мӑнкун кучченеҫне кӑтартатӑп.

– Хреснаннӳ лайăх çав вăл. Сана юрататъ, хĕрĕм. Халь тата ытти тăвансем патне кай.

Пĕтĕм хурăнташ патĕнче пултăм. Сĕтел çинче тем тĕрлĕ çăмарта, пылак-апат çимĕç.

Акă хура тĕспе пĕветнĕ çăмарта. Эпĕ ун çине кăмăлсăррăн пăхатăп. Килĕшмест вăл мана. Темшĕн?

Çĕмĕрт çырми çывăхне йывăç таканкки тăратса хунă. Каччăсемпе хĕрсем ун çине хире-хирĕç тăнă та чуччу ярăнаççĕ. Хĕрсем икĕ аркăллă пурçăн кĕпепе. Таканкки тем çӳллĕш хăпаратъ, пăхса тăнă чухне чун шикленет: çамрăк яш-кĕрĕм çĕре ӳкессĕнех туйăнатъ.

Эпир ача-пăча вăййине вылятпăр, унтан мăйăр, хĕвел çаврăнăш шĕкĕлчетпĕр, канихвет, печени çиетпĕр.

Тăвансем пĕр-пĕрин патне ĕрете çӳреççĕ.

Анне маларах сăра турĕ, сĕтел çине турилккепе пĕветнĕ çăмарта, тĕрлĕ пӳремеч, сучăн, капăртма, кукăль лартса тултарчĕ. Хăнасем çăмарта паттăрлаштарнă хыççăн урама тухса пукан çине хăпарчĕç те черетпе юрлама тытăнчĕç. Унтан пурте пӳрте кĕчĕç. Каллех ĕçкĕ юррисене шăрантарчĕç.

Асаннесем тепĕр урамра пурăнаççĕ. Пурте кĕпĕрленсе унта кайрăмăр. Ĕрет халăхĕ асаттене пысăк йăмра туратти çине хăпартса лартрĕ.

Вăл хыткан старикчĕ, çăп-çăмăл утса-чупса çӳрекен çынччĕ.

Асатте тĕрĕллĕ чăваш кĕпине тăхăннă, аллинче – сĕрме купăс.

Акă вăл инструменчĕпе выляма пуçларĕ. Йăмра айĕнчи тăвансем савăнăçлăн ташша пикенчĕç, эх, сикеççĕ, эх, сикеççĕ. Ниçта кайса кĕрейми савăнăçлă. Асатте çаплах кĕввине нăйлаттаратъ, лешсем чарăнма шутламаççĕ те.

Çакă ман ачалăхри чи асра юлнă илемлĕ ӳкерчĕк. Ăна нимĕнле эстрада та, театр та улăштараймасть. Чĕрĕ вăл, нихăçан та вилмест.

Эпӗ иккӗмӗш класра вӗренетӗп. Ҫу кунӗсенче, хӑшпӗр чухне, каннӑ хушӑра ачасемпе тӗрлӗ вӑйӑ выляттӑмӑр. Тӗпӗр-тӗпӗр чупса ялав вӑрламалла, «Кӑрттилле», «Пытанмалла», «Хӑваламалла», «Хӑналла», «Туйла».

Ҫӗмӗрткассинче Анна ятлӑ качча кайман пӗр хӗр пурччӗ. Вӑл килтен тухрӗ кӑна – Маруҫ:

«Анна-канна хыт канна,

Ҫӑкӑр ҫиет, – пӑс…ть,

Чӳлмек тӗпне шӑтарать», – тесе витлеме тытӑнчӗ.

Эпӗ Маруҫ ҫине ҫиллессӗн пӑхса илтӗм. Чӗлхи ҫине ҫӑпан тухинччӗ!

Ҫулсем иртеҫҫӗ. Пионера кӗни аса килет.

«Как повяжешь галстук,

Береги его», – тесе сӑвӑ калатӑп.

Мӑя хӗрлӗ галстук ҫыхса ячӗҫ. Ҫав кунран пуҫласа эпир Ленин хушнӑ пек вӗренме, ӗҫлеме пуҫларӑмӑр. Пурнӑҫ пӗтӗмпех шкулта иртет.

Кӗркунне. Хирсене сухалаҫҫӗ. Унта-кунта йӗркеллӗ пуҫтарса пӗтереймен сахӑр чӗкӗнтӗрӗ курӑнкалать. Пӗр класра вӗренекен тантӑшӑмпа михӗсем илтӗмӗр те уя васкатпӑр. Галя манран кӑшт тӗреклӗрехчӗ, ҫавӑнпа вӑл миххине те пысӑкраххине хӗстернӗ. Ҫитрӗмӗр, чӗкӗнтӗре пуҫтартӑмӑр, вун икӗ, вун виҫӗ килограммран кая мар. Анаран тухса ҫур ҫухрӑма ҫитрӗмӗр пулӗ, сасартӑк кӑшкӑрни илтӗнсе кайрӗ. Галя васкаса чупать, эпӗ унран пӗр ик ҫӗр метр каярах юлтӑм. Хыҫалти ҫын ҫывхарса-ҫывхарса пырать, эпӗ хӑрама пуҫларӑм. Акӑ вӑл мана хӑваласа ҫитрӗ, ку ял бригадирӗ Василий Петрович иккен.

– Малти кам вӑл? – тесе ыйтать манран. Тӗрӗссине каларӑм.

– Ыран колхоза ӗҫлеме тухатӑр-и ? – тет.

–Тухатпӑр, – тетӗп.

– Йӗтем тасататпӑр, – тет Василий Петрович.

Çырма урлă каçнă чух калуш юшкăна кĕрсе ларчĕ, ăна аран-аран туртса кăлартăм. Чĕкĕнтĕре киле илсе çитертĕм-çитертĕмех.

Анне кăшман, кишĕр, купăста, кавăн, çĕр улми кукăлĕ тăвать. Эпĕ ытларах кавăн кукăльне килĕштереттĕм, ăна шкула та чиксе каяттăм.

– Хĕрĕм, çăкăр çăрма вĕрентем-ха сана, – тет анне. – Майĕпен-майĕпен чĕресе çăнăхне ярса пыр, çăрсан-çăрсан – татах яр, чуста аллу çумне çыпçăнми пуличченех вăй хумалла.

Эпĕ ĕçе пуçăнтăм. Çăратăп-çăратăп, çăратăп-çăратăп. Чустана мĕн тĕрлĕ кăна пăтратмастăп пулĕ, чĕрес тĕпне çăнăхĕ ан юлтăр тесе апла та капла çавăрттаратăп. Йĕп-йĕпе пуличченех тăрмашрăм. Ай-ай, çăкăр çиесси çăмăл мар иккен, – шухăшлатăп ăшăмра.

Вăрçă хыççăн анне качака усратчĕ. Сĕтне ахаль ĕçнисĕр тата яшкана ярса çинисĕр пуçне вăл хăш-пĕр чухне çу уçлатчĕ. Çăвĕ те, уйранĕ те питĕ тутлăччĕ Кирккан.

– Ленук, сана уйран уçлаттарам-ха, – тет анне. – Ак çак бидона янă сĕте каллĕ-маллĕ лăка.

– Юрать, – килĕшрĕм эпĕ.

Хай тытăнтăм бидона лăнкăртаттарма. Пĕр сехет хушши силлерĕм ăна. Юлашкинчен лап-лап! туни илтĕнме пуçларĕ. Бидон хуппине уçатăп та: çу пĕрчисем пуçтарăнма тытăннă, тата кăштах ĕçленĕ хыççăн чăмакка пулса кайрĕ. Киле хĕвел тухрĕ тейĕн, эпĕ йăл! кулса ятăм. Çу! Эпĕ уçланă çу пулчĕ çакă.

Хĕллехи вăхăтра анне пир тĕртетчĕ. Станокĕ яланах пӳртре ларнă. Эпĕ пир кункăçне ярса параттăм. Анне маларах çипе хутăрлатчĕ, кайран ăна пӳлĕме аран вырнаçакан йывăç станок çинче тăсса каркалатчĕ, юлашкинчен кункăçлатчĕ.

Пĕрремĕш класра икĕ аркăллă кĕпепе шкула кайни нихăçан та асран тухмасть,тĕртнĕ пир çипписем хуššине мулине хутăштарнă. Çавăнпа кĕпи ĕлккен курăнать. Вĕрентекен:

«Ленук, кĕпӳ ай-ай, илемлĕ-çке», – темен пулсан аркăллă тумăма йĕркеллех тăхăнса çӳреттĕмччĕ ĕнтĕ. Тем юрамарĕ? Ытти вĕренекенсем хушшинче шурă курак пек курăнас килмерĕ-ши? – пир кĕпепе урăх шкула каймарăм. Ăна хамăр касри нумай ачаллă çемьери Валюка патăмăр. Амăшĕ, Венера аппа, парнешĕн питĕ савăнчĕ.

Венера аппан мăшăрĕ колхоз арманĕнче ĕçлетчĕ. Унăн кăнтăрлахи апата çын евĕрлĕ ларса çиме вăхăт пулман: пĕри тырă авăртма пырать, тепри.

Эпĕ арманçăн Валюк хĕрачи патне час-часах выляма çӳреттĕмччĕ, манран икĕ çул кĕçĕнрехчĕ вăл, пĕвĕпе чылай лутрарахчĕ. Çемьере асли пулнă май унăн килти вак-тĕвек ĕçсене пĕтĕмпех хăйĕн тума лекетчĕ: чашăк-тирĕкне, япалине çунă. Пĕчĕк аллипе епле тăрăшса ухсан та кĕпе-йĕмĕ витĕр тасалаймасчĕ. Урайне унăн кашни кунах хырса е хăйăрпа хăшкаса çумаллаччĕ.

Амăшĕ ачисене вăхăтра яшка пĕçерсе тăрантаратчĕ, час-часах кулач пĕçеретчĕ.

Витали тетене, Валюкăн ашшĕ ячĕ ку, пĕринче ял арçынĕ армана кĕрет те:

– Санăн арăмна Кĕркури Петĕрĕ нумаях пулмасть урамра ыталаса илнине куртăм, – тет.

Çакна илтнĕ хыççăн Витали тете арманне вăш-ваш çăрапа питĕрсе илет те килне вĕçтерет.

– Ну, арăм, тӳс халь, – тет те, – ăна урăм-сурăм хĕнесе пăрахать.

Вылякланса каланă Якку тете сăмахне пула Венера аппа пĕр эрне ура çине тăраймасăр выртрĕ.

Витали тетен арманне ревизи хыççăн пичетлесе хупса лартрĕç. Унăн вунă тонна ытла колхоз тырри тухмасть. «Килĕнче ачи-пăчи нумай, тĕрмене ярас мар, парăмне кунта ĕçлесех таттăр» – тесе ар çына ирĕкрен хăтармарĕç.

– Марче, атя иксӗмӗр пӗрле район центрне ҫӑкӑр туянма каятпӑр, – терӗ пӗринче Венера аппа. – Унта черете темиҫе хут тӑрса вунӑ-вун икӗ буханка илме пулатех.

Ун чухне эпир Никита Хрущев саманинче пурӑнаттӑмӑр, ял халӑхӗ кукуруза ҫӑкӑрне ҫиетчӗ, ӑна лавккара виҫеллӗ сутатчӗҫ. Вӑл пӑхма сарӑрах тӗслӗ, сӗтеклӗччӗ. Ҫӑкӑр-ҫӑкӑрах.

Анчах район центрӗн ҫулӗ вара… Каялла-маялла утса – вӑтӑр икӗ ҫухрӑм. Лавккинче ҫын хӗссе лартнӑ пек, хӑрах ура ҫинче сехечӗ-сехечӗпе тӑратӑн, ҫӑкӑрне пысӑкрах ҫунапа турттарса килес тесен, – кун иртсе каять.

Венера аппа пысӑк ҫемйине тӑрантарас тесе кун сиктерсе района танккать. Тем нуша та курчӗ, хӑш чухне ҫула кӗрт тултарса лартать, асар-писер ҫил-тӑман тухса каять те – аташа каятӑн…

Анне урӑх ҫӑкӑр туянма инҫет ҫула тухмарӗ.

Манӑн ҫывӑх тантӑшӑм Таня ятлӑччӗ. Ашшӗпе амӑшӗ уйрӑлнӑ. Калисса аппа пахчинче вӗллесем тытать. Анчах упӑшки пӑрахса кайнӑ хыҫҫӑн ылтӑн хуртсене йӗркеллӗ пӑхса тӑрайми пулчӗ. Лешсем вӗҫсе тухаҫҫӗ те, «ҫӑмха» пулса ларнӑ хыҫҫӑнах, хуҫи вӑхӑтра ҫитеймен пирки уя е вӑрмана тухса тараҫҫӗ. Вӗллесен шучӗ чаксах пырать.

Таня шкулта лайӑх вӗренетчӗ. Килӗнче икӗ шӑллӗне апат пӗҫерсе ҫитеретчӗ, амӑшӗ патне хире иксӗмӗр час-часах яшка леҫсе параттӑмӑр.

Калисса аппа ҫурчӗ юхӑннӑҫем юхӑнса пырать, хуралтисем ҫӗрсе йӑтӑнса анчӗҫ. Виҫӗ-тӑватӑ ҫултан, хӗллехи вӑхӑтра, килӗнче сивӗ ҫил выляма тапратрӗ. Шӑнса вилес мар тесе Калисса хӗрарӑм ачисене тӗп сакайӗнче вырӑн туса пачӗ. Каярахпа ку та пулӑшмарӗ, вӗсем Ҫӗпӗре тӑванӗсем патне куҫса кайрӗҫ.

Лариван пичче умне шурӑ саппун ҫакнӑ. Эпӗ пӳрт умӗнче тӑратӑп. Мана асӑрхарӗ те:

– Ленук, атя колхоз утарне, тăраниччен пыл çитеретĕп, халь кăна юхтарма пуçăнтăмăр, мана кăштах пулăшакан кирлĕ, – тет.

Эпĕ тăваттăмĕш класра вĕренетĕп. Пысăклантăм ĕнтĕ. Вĕлле хуртсенчен малтан шутсăр хăраттăмччĕ, халь хăнăхса çитрĕм.

Лариван пичче сеткăллă шлепкине тăхăнчĕ, аллисене шурă çитсăпа чĕркенĕ. Вăл рамăсене çӳлелле çĕклесе пăхать, эпĕ хамăр çывăха нăйлатса вĕçсе пыракан вĕлле хурчĕсене вĕркĕч тĕтĕмĕпе хăрататăп.

Колхоз пахчинче вăтăр вĕллерен кая мар. Вĕсене улмуççисен хушшине лартса тухнă. Лариван пиччепе темиçе вĕлле патне те çитрĕмĕр, ĕç вĕçленнĕ хыççăн вăл мана сĕтел хушшине пыл çиме лартрĕ. Сисмерĕм: тахăш самантра ман куçа пĕр хурчĕ сăннине лартма ĕлкĕрчĕ. Тепĕр кун хăрах куç хупланса ларчĕ.

Ĕçчен çынччĕ Лариван пичче, вăл килти вĕллисене те, колхозăнне те чыслăн пăхса тăратчĕ, районти чи паллă утарçăччĕ.

Çуллахи каникулта эпир, ачасем, тăван колхоза пулăшаттăмăр. Ноябрĕн 7-мĕшĕнче шкулта кашни çулах пысăк уяв туса ирттереттĕмĕр: концерт хыççăн вĕренекенсене кролик какай яшки пĕçерсе çитеретчĕç, пылак апат-çимĕç паратчĕç. Пирĕншĕн савăнăçчĕ çакă.

Эп ӳснĕ чух килте путексене усрама ăшă вите пулман. Вĕсем урайĕнче транкки-транкки сикетчĕç, таçта та хăпарса кайнăран урисене çинçе кантрапа тăллаттăмăр. Уйрăмах качака путеккисем ачашчĕ.

Эсир хур кĕтĕвĕ кĕтсе курнă пулĕ. Шăрăх çанталăкра ял çынни хурĕсене ирхине куçне уçсанах çырманалла курăк çине хăваласа ярать, – хăщĕ-пĕри колхоз тырри ӳсекен вырăнах илсе çитерет. Тулă пучахне тутанса курнă кайăк-кĕшĕк кайран та çав вырăнах туртăнать.

Анне ирхине тăвата сехетре вăратрĕ те:

– Ленук, хур кӗтӗвне каятӑн пуль, – тет. – Ял хурӗсем халӗ выҫӑ, курӑк ӗнсе кайрӗ, ҫынсем ҫакӑр та, тырӑ та парасшӑн мар: тӳрех тулӑ пуссине кӗрсе кайӗҫ. Бригадирсем тытса хупасран хӑрушӑ. Акӑ сана валли кӳршӗсен йыттине илсе каҫрӑм. Манӑн ӗҫе каймалла.

Пӑхса илтӗм те – пӗчӗкҫеҫ йытӑ.

– Ҫакӑнпа-и? – тетӗп. Кунпа епле кӗтӳ кӗтмелле? Хурсем курмаҫҫӗ вӗт ӑна.

Эпӗ сарӑхнӑ ҫерем тӑрӑх ҫара уран утса хурсене шыратӑп. Пӑхатӑп та, тырӑ хушшинче вӗсен пуҫӗсем кӑна курӑнаҫҫӗ. Шельмӑсем васкаса пучахсене кӑшлаҫҫӗ.

Мӑйкӑчлӑ йытта сӗтӗрсе каялла-малалла чупатӑп, хурсем пӗр ҫӗртен тухаҫҫӗ те тепӗр ҫӗртен кӗрсе каяҫҫӗ. Юлашкинчен хӑвала-хӑвала ывӑнса ҫитрӗм те куҫҫульпе макӑрма пуҫларӑм. Эпӗ йӗрсе ларнӑ хушӑра хурсем хырӑмӗсене тӑрантса хӑйсемех ҫырманалла шыв ӗҫме анса кайрӗҫ.

Тепӗр икӗ-виҫӗ ҫултан шкултан киле килтӗм те тӗлӗнсех кайрӑм: анне урай варринче ларать, ун йӗри-тавра сап-сарӑ, хальтерех ҫӑмартаран тухса ӳкнӗ хур чӗпписем утса ҫӳреҫҫӗ. Анне савӑнӑҫлӑ.

– Хӗрӗм, шутла-ха, икӗ хур ами вӑтӑр чӗп кӑларчӗҫ вӗт. Пӗри вун виҫӗ ҫӑмартапа ларнӑччӗ, тепри – вун ҫиччӗпе. Пӗр тӑрӑ ҫӑмарта та пулман. Шӑп-шӑкӑл тухса ӳкрӗҫ.

– Анне, эсӗ хур амисене лайӑх пӑхнӑ пуль? – тетӗп.

– Ҫук, унтан килмест, Ленук, пурнӑҫ ӑннине кӑна пӗлтерет. Ман вӗсене куҫ пек пӑхса ларма вӑхӑт ҫук, колхоз ӗҫне тухнӑ та кайнӑ, тухнӑ та кайнӑ.

«Хурсене кӗркунне шутлаҫҫӗ,» – тени тӗрӗсех ҫав.

– Хӗрӗм, хурсем курӑнмаҫҫӗ, ҫырма-ҫатрасене пӑхкаласа ҫаврӑн-ха, – тет анне.

– Юрать, – терӗм те, вӗҫтертӗм.

Ял хурӗсем ниҫта та курӑнмаҫҫӗ. Тырӑ уйӗнче пултӑм, пӗр чун та ҫук. Юлашкинчен лаша вити патне ҫитрӗм. Хӑлхана какаланӑ сас илтӗнсе кайрӗ.

– Чим-ха, мĕн ку? Пĕр пĕчĕкçĕ витере туллиех хур. Нумай шухăшласа тăмарăм, – витен уçă чӳречинчен тӳрех шала чăмрăм, хурсене пĕрерĕн-пĕрерĕн тулалла пăрахатăп. Ывăта-ывăта чăм шыва ӳкрĕм, витере пăчă, сывлăш çитмест, хурсем йĕп-йĕпе. Юлашкинчен чӳрече шăтăкĕнчен каялла тухрăм. Курсан тĕлĕнсех кайрăм, пур çĕрте те хурсем какаласа çӳреççĕ, вĕсем правлени çурчĕ патнех çитнĕ.

Акă бригадирпа икĕ арçын ман пата çитрĕç.

– Лена, хурсене витерен кам кăларса янă-ши? – теççĕ.

Таçтан çавăн чухне суйма тавçарулăх çитрĕ:

– Çакăнтан пĕр арçын ача аялалла вĕçтерчĕ, – анчах камне палласа юлаймарăм, – тетĕп.

Мана ĕненчĕç пулмалла, пĕри те урăх нимĕн те ыйтмарĕ.

Тепĕр вунă минутран ял хурĕсене пĕтĕмпех ирĕке кăларса ячĕç.

Пирĕн ачалăх çăмăлах иртмерĕ, анчах эпир савăнăçлă ӳсрĕмĕр, малта темле çутă шанчăк пурччĕ, пĕр-пĕринпе шăкăл-шăкăл калаçаттăмăр. Кӳршĕ-аршă патне кивçен çăкăр, çăнăх е мĕн те пулин илме каçаттăмăр, вĕсем май килнĕ таран ыйтнă япалана пама тăрăшатчĕç. Хамăр та вĕсен кăмăлне тивĕçтереттĕмĕр.

Эпир пуканесемпе, лавкка теттисемпе выляса ӳсмерĕмĕр, шăрпăк курупкинчен сăпка туса çакаттăмăр, çинçе патаксенчен кил карти тытса çаврăнаттăмăр, тăмран савăт-сапа туса пĕр-пĕрне хăналаттăмăр. Улăмран тунă пуканесем – пирĕн ачалăх. Унта эпĕ тепĕр хут кĕме те хатĕр.

## Днепр паттӑрӗ

*Поэма*

*Елчӗк тӑрӑхӗнче ҫуралса ӳснӗ Совет Союзӗн Геройне*
*Семен Алексеевич Андреева халалласа*

Сӑрт ҫинчен вӗҫсе анать
Йӗлтӗрпе Ҫемен.
Тваттӑри ача кӑна,
Калӑн, вӑл ҫӗмрен.
Пӑркаланчӑксем тума
Лартнӑ патаксем, –
Хушшинчен кӗрсе тухма. –
Тӳрӗ бамбуксем.
Варрине ҫитсен – трамплин,
Йӑкӑлт! ҫеҫ сикме
Тунӑ шӑпӑрлан валли
Хуҫӑлми йӗлме.
Ӳкекенӗ темӗн чуль
Аннӑ май сӑртран,
Якалса каять-ҫке ҫул, –
Чӑнкӑ сӑрт, куран.
Ҫунатланчӗ ҫӳлелле
Пӗчӗкҫӗ Ҫемен,
Вӗршӗн кайӑк вӗҫнӗлле,
Шутламасть ӳкме.
Ҫавӑн хыҫҫӑн ыттисем
Йӗлтӗр сырчӗҫ те
Эх, пуҫларӗҫ ярӑнма,
Шартлама мӗскер?
Чӗпӗтет вӑл кӑшт пите,
Хӗрнӗ аласем,
Сивӗ мар, паллах ӳте,
Ӑшӑ урасем.

Юр ларса хӗл иртиччен
Ачапча кунта.
Пепкерен яш пуличчен
Ярӑнать тулта.

«Выляр, ачасем, куҫ хуппилле,
Эп пулатӑп ҫын, – пытанмалла.
Сапаланӑр тӗрлӗ еннелле,
Манӑн халь сире шырамалла.
… Виҫҫӗ, тваттӑ», – терӗ те Ҫумкка
Тытӑнчӗ чупмашкӑн урампа.
Пӑхрӗ ҫурнӑ вутӑ таврашне,
Кӗчӗ хӑвӑрт пурасем ӑшне.
Ҫеменпе Ҫумкка – пӗр ят, туссем,
Час-часах тӗл пулӗҫ хайлавра.
Пӗлнӗ ачана ял ҫыннисем.
Ун ҫинчен пырать сӑмах-ҫавра.
– Тух, Машук, эс хурӑн хыҫӗнчен,
Ляванчи, Витали, Кӗтерук.
Валянчи, Терье тата Марче,
Тупрӑм эп сире. Ӑҫта Кирук?
Курӑнмасть арҫын ача ниҫта,
Чупкалаҫҫӗ ачасем. Таҫта?
Ҫавӑрттарчӗҫ пӗтӗм кӗтесе,
«Ан тупайччӑр», – терӗ пуль тесе.
Илтӗнчӗ сасартӑк пусӑран
«Пулӑшӑр! Путатӑп!» – тенӗ сас.
Тытӑнчӑк чӗнни хӑранӑран,
Тӗпӗр-тӗпӗр турӗ пӗтӗм кас.
Ҫӑлӗ ӑшӑх, пӗлтӗр чавнӑскер,
Пурпӗр путарасшӑн Кирука.
Шыв вӑл вӑйлӑ, шутсӑр чӑрсӑрскер,
Хӑпартаймӑн ҫынсӑр тӑруках.
Чупрӗ хӑвӑрт кӗлете Ҫемен,

Илчĕ хулăн явнă сÿс вĕрен.
Пусăна антарчĕ вăл ăна,
Вилĕмрен хăтарчĕ ачана.
Шыв сыпмашкăн ĕлкĕрнĕ Кирук.
Шăннăскерĕн кĕлетки чĕтрет.
Чирлесессĕн питĕ те хăруш:
Утялпа ял-йыш ăна чĕркет.

Сÿс тыллаççĕ кантăр анинче,
Тарăн вар шăв-шавлă, илĕртÿллĕ.
Пĕчĕк ачасем кÿмесенче,
Тылă шалтлатать епле хĕрÿллĕ.
Пысăкланчĕ пĕвĕпе Çумкка,
Пиллĕкмĕш класа вăл куçрĕ ĕнтĕ.
Пĕвĕ унăн çÿллĕ, яштака,
Çĕмĕрт куçĕ тĕлĕнтермĕш ĕнчĕ.
Кантăр çурăмне вăш-ваш салтса
Тылă çăварне чикет вăл хăвăрт.
Амăшĕ тыллать çиме манса,
Пурччĕ унăн хутаçра çур çăкăр.
Çунтараççĕ кантăр шăммине,
Хурăн пек вăл çирĕп мар, çăт-çатăр.
Пурпĕр çавă кирлĕ çуртсене.
Усă панă çынсене сÿс-кантăр.
Акă кÿлчĕ те Çемен лаша
Пĕтĕм вакă-тĕвеке тиерĕ, –
Килĕрен валеçрĕ ял-йыша
Çунтармалăх, вутă мар, пĕлетĕр.
Ватă кинеми патне кĕрет.
Вăл пĕччενçĕ иккенне курсассăн
Кантăр шăммине пĕччен çĕклет,
Лешĕн куçĕ çуталать хавассăн.

Шутлама Çемен ăста:
Пур задача парăнать.
Кăткăс чĕлхепе анчах:
Йăнăш темĕншĕн ярать.
«Марафон» тес вырăнне
Авăкланă «марофон»,
Тимлĕх, чăтăмлăх çитмест,
Е вăл лайăх итлемест?
«Виççĕ» паллă илнĕ чух
Унăн пĕртте кăмăл çук:
Урама тухас килмест,
Шкулалла утас килмест.
Мĕншĕн эпĕ çакнашкал
Вĕренетĕп-ха, Çумкка?
Мĕншĕн шухă та кахал
Пулмалла маттур ача?
Кашни кун вулавăшра
Ларчĕ малалла Çемен.
Кĕнеке вулать, ара.
Тытăнчĕ вăл вĕренме.
Сочинени те диктант,
Изложени, калавсем
Вĕçĕмсĕр килте çырать,
Иксĕлесçĕ йăнăшсем.
Илчĕ Пушкин романне,
Достоевский çырнине,
Кунсерен вулать-вулать,
Асĕнче йăлтах юлать.
Килĕшрĕ чăвашлăх та:
Пĕлмелли чылай унта,
Халăх пурнăçĕ, шăпи,
Кукăр-макăр пулĕ пин.
Пĕлчĕ Çеçпĕл кун-çулне,
Курчĕ халăх куççульне,

Акă мĕн вăл кĕнеке?!
– Илмĕп «виççĕ» эп текех.

Нимене чĕнет Миккуль тете.
Хăпартасшăн йывăç çурт васкавлăн.
Ватă-вĕтĕ, вăйлă ар тем чуль,
Никĕс çирĕп, халăхĕ хаваллă.
Арçынсем йăтаççĕ пĕрене,
Мăк хураççĕ инкесем хаваслăн.
Ĕç вĕçленчĕ шăп та каç енне,
Пулчĕ çурт сап-сарă та мăнаçлă.
Никĕс янă чух каларĕ пĕр арçын:
Пусă чавмалла мĕн вăйлă çыннăн.
Ывăл-хĕр те ун ӳстермелле,
Пултăр шăнкăрч вĕлли пек çурт унăн.
Тăпăл-тăпăл пӳрт лартас шутпа
Ĕмĕтленчĕ нимере, ай, каччă.
Пурăнма тĕв турĕ арăмпа,
Чĕрине вырнаçрĕ пысăк шанчăк.

Ăмăрту ирттерчĕç кĕç шкулта.
Йĕлтĕрçĕсем чупрĕç тĕлĕнмелĕх.
Çитрĕ пуринчен малтан Çумкка.
Пулчĕ акă финишра парнеллĕ.
Çĕнтерӳçĕ йĕлтĕрне илме –
Кивĕ саманашăн – çăмăл марччĕ.
Талпăнмашкăн, чыслăн çĕнтерме.
Каччă картлашка çине хăпарчĕ.
Шкул пĕтернĕ хыççăн çамрăк çын
Уй-хирте ĕçлерĕ, – бригадир.
Ашшĕ кайрĕ çапăçма вăрçа,
Çемен тăсрĕ йывăр пурнăçа.

Амăшĕ уйра кĕлте çыхать,
Аппăшĕ килте нуски çыхать,
Ăсатаççĕ тыррине фронта,
Çăм чăлхи те, çăм алсиш – унтах.

Пĕр килтен – киле,
Пĕр касран – каса
Чупкалать Çумкка,
Вăрçă – памалла,
Салтаксем валли –
Çăм нуски, алсиш.
Тăм илет алли:
Сивĕ хĕл касать.
Туртмалли, мундштук,
Пĕчĕк енчĕксем
Пуçтарать ялта,
Ăсатать фронта.
Пĕтĕм тыр-пула –
Пĕрчĕ юлмиччен –
Ыраша, тулла,
Ячĕ вăл качĕн.
Карчăк-кĕрчĕке,
Сусăр-чăлаха
Пулăшать ĕçпе:
Вăл тăвать ака.
Выльăх пуçтарать,
Çĕр улми лартать
Çамрăк-кĕрĕмпе,
Ял ачапчипе.
Сивĕ кунсенче
Касрĕ вăл вăрман,
Ăшă кунсенче
Авăртрĕ арман.

Кăйттăм-кайттăмпа,
Тĕнкĕл-тĕнкĕлпе
Вырчĕ уй-хире,
Пулчĕ шав тĕрек.

Пĕр çул çитрĕ нимĕç тапăнни.
Ăшă кун. Хĕвеллĕ кĕр. Сентябрь.
Кур, Андреев Хĕрлĕ Çар çынни.
Хальлĕхе – Тюмень. Ун чаçĕ сапăр.
Вĕренет Çемен полк шкулĕнче,
Кĕçĕн командир ятне кĕç пачĕç,
Вăл пĕтерчĕ ĕнтĕ вĕренсе,
Сержанта фронта сасартăк ячĕç.
Автоматчиксем ирпе ирех
Каçмалла-мĕн Днепр шывĕ урлă
Сулăпа та пысăк кимĕпе,
Савăнăç-и вăрçă? Тусăм, – хурлăх.
Ĕмĕте хупларĕç фашистсем:
Вăрçă! Пĕлĕр! Тапăннă Германи.
Брест çине ÿкеççĕ бомбăсем,
Çак куна этемлĕх йăлт манма-и?!
Ял çынни ăсатрĕ Çемене
Хĕвел- анăç еннелле салхуллăн,
Амăш чикрĕ тутăр кĕсйине
Куççулленчĕ, йăлкăшмарĕ кулă.
Каччă тухрĕ çапăçу уйне,
Днепр минăпа хупланнă.
Вăл курманччĕ вăрçă çулăмне,
Курчĕ те, çухалчĕ ĕмĕт-шанчăк.
Пуля шăхăрать мĕнпур енчен,
Кам – кама? Перетĕн те чупатăн.
Мĕн тери хăрушă çут тĕнче,
Вилĕм уйăрмасть: те çамрăк, ватă.

Пĕр пекех тĕллеççĕ куçунтан,
Чĕрӳне лартаççĕ çивĕч çĕçĕ,
Хӳтĕлевçĕ çук сан çумунта,
Пĕр пекех ваклать фашистăн хĕçĕ.

Днепр шывĕ леш енче – тăшман,
Тӳперен тăкаççĕ йывăр бомба.
Украина, темшĕн савăнан?
Кирлĕ-и сана снаряд та тупă?
Курăр, кимĕ, сулă сирпĕнет,
Днепр хумĕ анлăшпех хĕп-хĕрлĕ.
Вырăс çарĕ малаллах ишет,
Шыв çыранĕ питĕ-питĕ кирлĕ.
Пирĕн çар позиции йышăнса
Çул уçасшăн малалла каймашкăн.
Пуля çурĕ çумăр пек тăкса,
Чăрмантарчĕ леш енне каçмашкăн.
Пинĕ-пинĕпе чăмать салтак,
Камăн çĕрĕ çакă? Мĕншĕн вилчĕç?
Хӳтлĕх пулĕ тетĕн-и малта?
Тăкăл-тăкăл! сас, пĕр вĕçĕм печĕç.

Çитрĕ Андреев сулли çырана,
Хăйăр çинче пуçланать çапăçу,
Çĕр лаптăкĕ куçрĕ алран та алла,
Нимĕç фашисчĕ тӳсет çухату.
Пурĕр каймарĕ тăшман айккине,
Çиçрĕ ракета. Снаряд, минăсем…
Печĕç хăрушшăн çине те çине,
Юлчĕç шывра Хĕрлĕ çар, салтаксем.
Анлă плацдарм йышăнмашкăн полка
Панă приказ, пурнăçлас хушнине.

Тěплěн пěлмесěр пур фрицăн йышне
Пěтерěн-и пěтěм тискер салтака.
Хăвăрт разведка тухать сěм çěрле.
Танк, самолет шучě пур-и? Мěн чуль?
Шурě Андреев, ун тусě пěрле,
– Килěр васкавлăн, ан çутăлччě тул.
Икě сехет, тен, кěтетпěр тата?
Çутă сăн çапрě, разведка килмест.
– Куратăр-и? Чěрě! Андреев малта.
Шăваççě. Мěн пулчě? Снаряд сирпěнет.
«Вилчěç пулас!» – терě хурлăн пěри,
Бинокльччě унăн, паллах, командир.
Пăхрě каллех тинкерсе мал енне,
Курчě туссем пěр-пěрне çăлнине.
Тепěр кунне ирхине улттăра
Эх! Артиллери силлет тăшмана,
Атака пуçланчě, фриц çарě тарать,
Анчах пулемěчě çаплах кăтăрать.
Гвардеецсем выртрěç çěре туххăмрах,
Тем чухлěн пуç хучěç, чěрри те вилли.
Улт танк аякраччě, тăраççě умрах,
Кам çарě хăватлă? Кам çарě халли?
Шурă хěреслě танксем кěрлени
Хыттăн хупларě шавпа таврана.
Шурěç вěсем пěр Андреев патне,
Сирчě разведчик пěрех тăшмана.
Унсăр кунта çук-шим урăх салтак?
Танксемшěн окоп та окоп мар, туссем.
Çырмаччě, воронка е шăтăк – малта,
Бомба шăтарнă тумхах вырăнсем.
Шурěç вěсем хăрамасăр мала
Тěрлě варпа, лакăм-тěкěм çěрпе.
Айлăм пулмин. Танкшăн мěн тăвалла?
Акă окоп. Умěнче – салтаксем.

Граната шартлатрĕ, – пĕр танк чарăнать,
Пăрахрĕç ик-виççĕн, – вут-çулăм карать.
Кураççĕ: ик танкăн туппи пенине,
Ют пулемётăн усал пульлине.
Хыттăн переççĕ окоп ăшнелле,
Тăваттăмĕш танкĕ туймасăр чăрмав
Шурĕ каллех салтаксем еннелле,
Уншăн пулмарĕ-çке темшĕн хăрав.
Çитрĕ Çемен кĕç воронка патне,
Меллĕ самант кĕтрĕ лăпкăн пеме.
Ак бронебойкăна ярĕ хута,
Вăл тавăрасшăн çĕр-шывшăн юта.
Тĕллерĕ кăна – мина пуль, шартлатать,
Ун хумĕ ăна айккине пăрахать.
Тăчĕ Андреев: «Фриц, ирсĕр!» – тесе.
Шурĕ çав танкĕ каллех силленсе.
Печĕ – лекмерĕ. «Тараймăн манран!»
Хытă аманнă, ыратрĕ суран.
Икĕ хутчен бронебойщик перет,
Курчĕç: Андреев танка çĕнтерет.
Паттăр патне çитеймерĕ çак танк,
Хыпрĕ ăна вăйлă çулăм-вут, ак.
Пулнă-мĕн мина, шалта ун, снаряд
Кĕрр! кĕрĕслетрĕ хăрушă хăват.
Тек бронебойка памарĕ сасне,
Рота каларĕ Андреев ятне,
Чыслăн пытарчĕç патвар салтака,
Паттăр ятне пачĕç акă ăна.

Питĕ инçе пирĕнтен вил тăпри,
Солонянск тăрăхне, Вовниче çитĕр-и, –
Курăр, туссемĕр, Çемен палăкне,
Сапăр сăвапшăн çулла чечекне.

Комсомолец пулнă май Андреев
Лартнă йывăç Ленин ячĕпе.
Çитĕнет паян ялта аллея,
Вăл – Андреев паттăр ячĕпе.
Класс, дружина, кÿлĕ, шкулăм, фирма
Çыхăннă унпа ман тăрăхра:
Пĕтĕм хир, çырма, пур айлăм, хырлăх…
Ячĕ унăн – пирĕн халăхра.

## Чул чечек

*Поэма*

Çитрĕ кĕр. Сап-сарă тулă.
Вăхăт ĕнтĕ пуçтарма.
Уй карапĕ тытрĕ Толя,
Тытăнчĕ хире вырма.
Шĕкĕлчерĕ типнĕ майăн
Кăмăлçахăн паккуса.
Тырă пулчĕ питĕ лайăх:
Савăнтарчĕ колхоза.
Çăкăр çеç-и? Пысăк тухăç
Кӳчĕ кишĕр, çĕр улми…
Çимĕç йышлă, шухăш çуккă:
Тĕп сакай, кĕлет тулли.
Пĕрлешме шутларĕ йĕкĕт
Хăйĕн савнă хĕрĕпе.
Тахçанах шутланă ĕмĕт
Пурнăçланчĕ пĕр ирпе.
Лăпкă та сăпайлă Толя,
Иртĕнмест пач эрехпе.
Чĕлĕм те туртмасть, хавallă.
Качча пиçĕхнĕ ĕçпе.
Туй тумашкăн лартрĕ амăш
Пылланмашкăн ăслине,
– Йӳçтĕр, – терĕ, – акăш-макăш
Кин кĕртмешкĕн сăрине.
Улăм витĕр тухнă хыççăн
Сĕрчĕ те алапалан,
Кăмăллăн тутанчĕ: « Уçă,
Ăнтăрччĕ ĕç-пуç ялан.»
Аслă урамран кăларчĕ

Толя чунĕ савнине,
«Валентина» – хĕрĕн ячĕ,
Каччă илчĕ кĕтнине.
Тăчĕç венчете саккунлăн
Аслă Турă хушнă пек,
Мăшăрланчĕç лайăх: туйлă,
Хамăр халăх йăлипе.
Ашшĕ-амăш пил памасăр
Хĕр салтмарĕ саппунне,
Илтнине ăша хывмасăр
Çывхартмарĕ савнине.
… Иртрĕ туй. Телейлĕ çамрăк.
Юратуллă ик чĕре.
Валентина ĕнтĕ арăм.
Толя унпăн – вăй-тĕрек.
Йывăç çурт çĕклерĕ Толя
Уйрăлса тухса килтен.
Хĕр ача çуратрĕ Валя,
Çĕнĕ кайăк – тĕпелте.
Тракторпа çĕр сухаларĕ
Валентина упăшки.
Шăйăрмарĕ, çурчĕ тарăн.
Çĕрĕн пур, паллах, нуши.
Ак ыраш акса хăварчĕ
Толя аслă лаптăка.
Çур тыррипĕн çĕр хăварчĕ:
Тулă кирлĕ халăха.
Сĕлĕпе урпа, пăрçашăн,
Хуратулшăн юлнине
Сухаларĕ вăл ир-каçăн,
Çĕрĕпе те хăш чухне.
Темшĕн çук пăри ку чух
Акаканĕ Чăвашра?
Çиекен никам та çук.

Кирлĕ мар-тăр вăл,ара.
Толя саврĕ пăрие,
Саврĕ юрăç- тăрие.
Сухаларĕ уншăн-куншăн,
Ĕçлемерĕ çичĕ ютшăн.
Хĕл ларман, кăшт сулхăнлатрĕ.
Шăнтрĕ, тăнкăр-тăнкăр! çул.
Толя вĕренмешкĕн кайрĕ.
Пулмалла электрик ун.
Икĕ уйăхран вăл килчĕ
Çаврăнса тăван яла.
Сивĕ хĕл. Хупланнă пылчăк.
Илнĕ Толя хут алла.
Çитрĕ çеç – пралук кармашкăн
Пӳртсене кĕртме çутта
Арсене илсе каяççĕ,
Мĕн кĕтет çынна унта?
«Çăтăр-çăтăр сивĕ, – теççĕ, –
Çĕпĕр çĕрĕ», – ял-йышра.
Çăмăл мар электрик ĕçĕ,
Кунĕн-çĕрĕн урамра.
Çил-тăманлă-и çанталăк –
Çын утать таса уйра.
Таврăнмасăр талăк-талăк
Каркалать пралук, ара.
Толя чăтрĕ, шартлама-и,
Сăлпăран-и, çумăр, пăр, –
Нимĕнрен те хăрамарĕ,
Ар темелĕх вăйĕ пур.

***

Инçет Хĕвел-тухăç пиртен аякра,
Ял-ял питĕ çывăх кунта, чăвашра.
Электрик арсем лекнĕ сивĕ çĕре,

Тем тĕрлĕ çанталăк, куран, тĕнчере.
Кушакăн хăпарнă е аннă çÿлтен,
Утатăн-утатăн, утатăн, – сÿтен.
Пуш-пушă уйра, çеçенхир варринче,
Пĕр çынсăр варта, тĕмеске хĕрринче.
Хĕл иртрĕ, çур çитрĕ, хĕвелĕ çиçет.
Эсĕ ăçта, Хĕвел-тухăç инçет?
Валя кĕтет мăшăрне кашни кун.
Чунĕ теме инкеке сисрĕ ун.

***

– Вăрçă пуçланнă! Çĕр-шыв чиккине
Пăснă Германи, – тесе ирхине, –
Пĕлтерчĕ сасартăк ял-йыш пĕр-пĕрне,
Хăрушă! Тем хĕсрĕ пусса чĕрене.
Повестка илсессĕн тÿрех Йăкăнат
Васкарĕ фронта фрицсемпе çапăçма.
Куççуллĕн ăсатрĕç мĕн пурĕ ăна,
Те пулĕ, те пулмĕ кайран курнăçма.
Çитăр ăсанчĕ, Миккуль, Митрахван,
Сантăр, Çеркки, Ахванеç те Ванюк,
Сарă яш каччă Аркаша, Иван,
Петĕр те Тиххăн, хĕрарăм Анюк.
Толя та илчĕ повестка часах.
Тухрĕ çула Канаша пуйăспа.
Иртрĕ-çке вăхăт чăрмавлăн анчах,
Çук-тăр çав ăрăс. Мĕн тăвăн? – шăпа.
Пуйăс шăвать те шăвать хашлатса,
Пилĕк кунпа пилĕк каç çул çинче.
Çитрĕ аран кăнтăрла Канаша,
Пăхрĕ те Толя, унта çын – тĕнче!
Хĕснĕ пек халăх вокзал тавралла,
Килнĕ-ши Валя? Паллаймăн пĕрех.
Вунă минут акă пур, тăхтама,

Валя шырарĕ, курмарĕ, – йĕрет.
Иккĕн вĕсем, юнашар Элекçи,
Тольăн ашшĕ шырать ывăлне.
Нимĕнсĕр-мĕнсĕр килмен ырă çын,
Вăл упранă шăрттанĕ-пылне.
… Пуйăс тапранчĕ чуна çурасла,
Ах, йĕреççĕ çынсем перронта
Вăрçă хыççăн нихçан курмасла,
Кайрĕ Толя çĕр-шывшăн фронта.

***

Хĕрĕх пĕрмĕш çул – тулта.
Шутсăр сивĕ. Çăкăр çук.
Йытăсем те çук ялта:
Выçă халăх, ним те çук.
Пĕчĕк Вера: «Пашалу», –
Тет çиесшĕн вĕçĕмрен.
Камăн пур укçи, шалу?
Валяппаçăм шав ĕçре.
Йăпатмашкăн ачана
Кÿршĕ хĕрĕ Кĕтерне
Улăм пукане-чана
Туса пачĕ каçхине.
Вăхăт-вăхăт пурпĕрех
Выçă хырăм найкăшать.
Вера куççульпех йĕрет.
Çăкăрсăр çынсем. Нуша!
Ĕçкуньпе пĕр пăт таран
Пачĕ бригадир ыраш.
Çын пуçне çуршар, ара.
Вăкăрсем валли – фураж.
Ал арманĕ килсерен
Кăлтăр-кăлтăр! аваратъ.
Халăх выçă вилесрен

Типнĕ курăк авăртать.
Çапрĕ симĕс тĕс ӳте
Чăкăт курăк çинĕрен.
Йывăр питĕ: чун кӳтет,
Çăлăнасчĕ вилĕмрен.
Çĕр улмисĕр яшкана
Янă ячĕшĕн кĕрпе.
Урăм-сурăм самана,
Чăрлатать ăш çĕрĕпе.
Мĕн парас? – ыйткалакан.
Тилмĕреççĕ кӳршĕсем.
Çăкăрсăр çынсем ялан:
Путнă пысăк куçĕсем.

***

Альтаппа сиксе вăранчĕ
Тем вĕрет? Те çил, те анчăк?
Чир çакланнă ывăлне,
Карнă Çитăр çăварне.
Çурчĕпех инкек пуçланчĕ:
Тĕпĕр-тĕпĕр! Пуç пăтранчĕ,
Тиф йĕртет-мĕн кил-йыша,
Вăл хаяр: пăвать ăша.

***

Тупрĕ выльăх масарне
Альтаппа ирех.
Чаврĕ тĕмĕ айккине,
Кăртлатать чĕри.
Шăршлă вăкăр виллине
Туртрĕ куççульпе,
Касрĕ икĕ пĕççине
Çивĕч çĕççипе.
Выçă ачисем валли

Пулчĕ-çке какай.
Шăп та вуннăн халь вĕсем,
Пурнăç-и? Ай-ай!
Аш хуллен вĕрет-вĕрет
Тимĕр хуранта.
Альтаппа пĕччен йĕрет:
Эрлĕк ун шалта.
– Гитлер, мĕншĕн эс пуçтах?
Сăнсăр та тискер!
Эсĕ айăплă йăлтах!
Нимĕç, чунсăрскер!

***
Килнĕ яла Якуркка вăрçăран.
Вăрăм шинеллĕ. Аманнă алли.
Çутă, илемлĕ çапах вăл сăнран.
Калăн, пăхсассăн – чеелĕх палли.
Халăх кăларчĕ часах сас-хура:
«Пенĕ вăл имĕш хăйне-хăй фронтра.
Кукăр ун имĕш пĕр ятсăр пўрни,
Çапăçнă пулнă унпа ял çынни.
Паттăр пек тытрĕ хăйне Якуркка:
«Тытрăм, – тет, – вăрă, çаклатнă хура.
Уншăн ăна тĕрмене ямалла,
Пултăр, – тет, – Зина, – яваплăн, – чура».
Кайрĕ тытса Зинăна милици,
Улатăр хулин тĕрмине ĕçлеме.
Вăл пилорама завочĕ иккен,
Тўснĕ, шар курнă хĕрарăм – инкек.
Вăрăм кĕпи çаврăнса кĕнĕ тет,
Çурнă чухне пĕрене хушшине.
Зина çакланнă та – тăнсăр ўкет,
Пăчкă кăшланă хăрушшăн ўтне.

***

Çыхнă Якуркка хĕрсен аллисене,
Окоп чавма ярать вăл вĕсене.
Сивĕ хĕл-и, шарлама-и – пурпĕрех,
Хăй ларать пĕр ĕçсĕр хӳтĕре.

***

Çитрĕ фронтран тĕрлĕ-мерлĕ хыпар:
Вилнĕ Арçук, Ахванеç, Михаля…
Уй варринче тăраканĕ пĕр ар,
Ыттисем – арăмсем, хурлăх пусрĕ яла.
Тулчĕ пулĕ пĕве уласа йĕнĕрен,
Шăтрĕ пуль хытă чул куççульпе.
Çумăр шывĕ юхать кĕп-кĕрен,
Урамсем те хирсем йĕп-йĕпе.

***

Фронтра çапăçаççĕ,
Хаяр нимĕçсем,
Йăлтах хыптараççĕ,
Çунаççĕ çуртсем.
Кĕлленчĕк те ванчăк
Юлать хыçала,
Аманчăк – чун-шанчăк,
Епле-ха капла?
Мускавăн чĕришĕн
Тăшман касăхать.
Пĕлместпĕр çав, мĕншĕн
Касать те касать?

***

Блокада. Синкерлĕх.
Вутра Ленинград.
Хăрушă! Тискерлĕх.

Вăл выçă, хура.
Пĕр кайăк йăви те
Юлман тет унта.
Пĕр кашкăр вилли те,
Чăх, чĕрĕп, калта.
Йăлт çинĕ блокада
Кăпшанкă таран.
Кушакĕ çук, йытă,
Сывланă аран.
Ай, çăкăрĕ-мĕнĕ?!
Пĕр йывăç кĕрпи
Пурнасшăн çын çинĕ.
Хĕн тӳснĕ çĕр-шыв.
Кукка хӳтĕленĕ
Ун чух хулана,
Шав çапăçнă, пенĕ
Усал тăшмана.
Аманнă та кĕнĕ
Каллех вăл вута.
Çапла çеç çĕнтернĕ
Çĕр-шыв фашиста.

***

Гитлер çарĕ Мускав патĕнчех,
Хĕрĕх çухрăм кăна вăл çитмешкĕн.
Хуламăр çинче ют разведка вĕçет.
Пĕр тĕслĕ Мускав, çук пĕлмешкĕн.
Кураймастăн çĕрле складсене,
Кремльпе заводсем те «çухалнă».
Асăрхаймăн çӳлтен çынсене,
Яш-кĕрĕм вăрçмашкăн йăлт кайнă.
Пăрахнă иккен Мускава
Чуххăм-чаххăм кăна пĕр-ик бомба.
Тасатнă вăр-варрăн ăна

Тул çутăлнă май хăвăрт, лăпкăн.
Куçаççĕ çарсем тĕп хула çывăхне,
– Пĕтетпĕр Мускав нимĕçе парăнсассăн!
Чĕнеççĕ çитме Тольăсен ротине,
Каларĕ комбат çирĕп саслăн:
– Мускав – хыçра,
Тытар асра.
Пĕр утăм та ан чакăр!
Пĕлсемĕр, кĕтĕ трибунал,
Ман вăхăт çук. Хускалăр!

***

Куçа курăнаççĕ хĕреслĕ танксем,
Те ик çĕр, те виç çĕр? Шăваççĕ вĕсем.
Май çук шутламашкăн, таçта кисренет,
Те пĕлĕт хускалчĕ? Те çĕр чĕтренет?
Переççĕ таттисĕр унта та кунта,
Танксем сирпĕнеççĕ, снаряд шартлатать.
Тра-та-та! Тра-та-та! илтĕнет таврара,
Шăтăр-шатăр! тăвать чарăнми хăлхара.
Пĕр танк ушкăнне сирчĕ Толя роти,
Вилесем урлă акă чупать.
Талпăнать-талпăнать ирсĕр чун ăратти:
Вĕссĕр-хĕрсĕр тăсланчăк утать.
Пулемĕт-автомат сассипе хупланса
Ларчĕ аслă вăрман та уй-хир.
Шурă çĕр тĕтĕмпе, пăрăхпа хуралса
Путăкланчĕ. Те каç, çутă ир?

***

Толя кĕç гранатăпа
Вĕçрĕ танк патне.
Шурĕ-шурĕ хырăмпа,
Çĕклемест пуçне.

Асăрхарĕç пулмалла:
Пуля тăкăнать,
Хытă чĕпĕтрĕ алла.
Юн-и? Сăрхăнать.
Рота тусĕ, Тимахви,
Патăрьел каччи
Курчĕ Тольăна, хайхи.
Мĕн тăвать вăл? Чим.
Тытрĕ те гранатăпа
Ыткăнса чупать,
Иртрĕ хăвăрт Тольăран,
Чупрĕ, – ывăтать.
Çулăм хыпрĕ танк ăшне,
Чарăнчĕ, шумасть.
Каччă çăлчĕ юлташне,
Хăй вăл пурăнмасть.

***

Кĕртмерĕç фрица Мускава,
«Катюша» ăна парăнтарчĕ.
Вăл пачĕ пурне те хăват,
Пурнаслăх, хаваслăх та шанчăк.
Хĕле чăтайман нимĕçсем
Кур, çыхнă мăйне тутăр, çитсă.
Тăратчĕç раштав сиввисем.
Тăм илтĕр питне, фриц, Иуда!
Хăратрĕ, пĕлен, шартлама
Француз Бонопартăн çарне.
Ан тапăн, тăшман, – харама!
Ăнланмăн эс вырăс çĕрне.
Ун мулĕ епле пулнине
Пĕр çăткăн та сăхă чухлаймĕ,
Курмасăр кĕпе аçлăкне,
Ун тарĕ мĕнле-ши? – Тăварлă.

Кăрлачăмăр, нарăс, раштав, –
Пирĕн сивĕ çанталăк, илемлĕх.
Тăманшăн, юкашăн хĕле шутсăр тав:
Çын юршăн, пĕлсемĕр, телейлĕ.
***
Нимĕç çарĕн эшелонĕ
Украинăнаваскать.
Салтаксен хаваслă чунĕ:
Вырăс çĕрĕ мар малта.
Толя – партизан отрячĕн
Командирĕ вăрманта.
Таврара «Геракл» ячĕ
Паллă: шутсăр хăратать.
Вăрттăн ĕçĕн – тĕттĕм касĕ.
Сирпĕннĕ чух пуйăс çеç
Вăйкăнать нумай хăлаçăн,
Кайăнать сасси инçе.
Полицай тăсланчăк фрицшăн
Хаклăран та хаклăскер.
Пуç таять, вилет вăл уншăн.
Вырăса сутать çавскер.
Çитрĕç салтаксем, вырнаçрĕç
Çуртсене, унта-кунта.
Полицайсемпе калаçрĕç
Çынсене илме шута:
– Партизан пулса çӳрет-и
Украина ял çынни?
Вăрмантан çĕрле килет-и?
Мĕн кивви те мĕн çĕнни? –
Пĕлмелле йăлт полицайăн,
Список памалла штаба.
Вырăссем мĕн чуль? Нумайăн?
Кам та кам? Ăçта? Кампа?
Тытнă партизаншăн Гитлер

Çĕнĕ тум парать сире.
Пулĕ хырăмăр та, итлĕр,
Сирĕн тутă ир-ирех.
Тарнă чух персе пăрахăр
Совет çарĕн салтакне.
Çакăр, чикĕр, касăр, ваклăр,
Кăклăр вырăсăн йăхне.

***

Ял шăпланнă, тарăн ыйхăра.
Икĕ вырăс, Толя сĕм çĕрле
Шăппăн çеç шаккарĕç пĕр киле,
«Украинка» кĕртрĕ алăкран.
Чăмламасăр вырăс чĕлхипе
Тĕрĕс те илемлĕ каласа
Пачĕ вăл, ай,тĕплĕн, ерипен,
Нимĕç çарĕ пĕтессе шанса.
Мăшăрĕ ун çапăçнă иккен
Юнлă Сталинградăн вутĕнче.
Татнă унăн пурнăçне инкек:
Юлнă ак хĕрарăм тăр-пĕччен.
Çӳçĕ сарă, куçĕ кăн-кăвак,
Йăрăс пӳллĕ, вырăс чунĕпе.
Тӳрĕ кăмăлпа ачаш пăхать,
Мăн аслашшĕ евĕр сăнĕпе.
Революци хыççăн Раççейрен
Йăхĕ куçнă имĕш кунталла,
Вăрçă тухасса пачах кĕтмен,
Тем хăрушлăх пулĕ малалла?
– Атьăр, – терĕ Соня, – пĕр çĕре,
Курăр, нимĕç хĕç-пăшалĕ çак.
Кирлĕ пулемĕт, патрон сире,
Ак граната, автомат, пăшал…
Пĕлĕп эпĕ тĕплĕнрех тата

Кĕçĕр нимĕç кĕнĕ килсене.
Хуйхăртрĕç вĕсем çынна пайтах,
Çĕнтересчĕ пирĕн вĕсене.
Икĕ кун иртсессĕн Тольăпа
Пилĕк партизан каллех – ялта.
Вăрттăн çеç тĕл пулчĕç Соньăпа,
Пĕлчĕç, сырчĕç, кирлине пайтах.
Ирсĕр нимĕç ушкăнĕ çĕрле
Урăм-сурăм ĕçкĕпе кĕрлет:
Мăшкăллană ир енне хĕре,
Офицерĕ чунсăр – вĕлерет.
Чăтаймасăр намăс-симĕсе
Хĕрĕн амăш тупнă та бензин
Вут хыптарнă ушкăн-нимĕçе,
Кăмрăкланнă имĕш пĕтĕм çын.
Хăш килте мĕн вылăх пуррине
Пĕлнĕ йытă-полицай Ванько.
Вăл пустарнă чухăн вăкăрне,
Ĕнтнĕ пĕтĕм сыснана Янко.
Нимĕç йĕркине тăвас шутпа
Староста шаккать килрен-киле.
Вată-вĕтĕ утрĕ урампа,
Вĕрейместĕн хирĕçле çиле.
Чимĕр-ха, курнать-ши, ай, куçа?
Çавăтса килеççĕ арçына.
Татăк-кĕсĕк йĕмĕпе кĕпи,
Пичĕ юнлă, тухнă кăвапи.
Тăнкăл-тăнкăл, ерипен утать,
Тапхăр-тапхăр сулăнса каять.
Пурпĕр вăл ўкмерĕ хал çукран,
Çирĕп кăмăл пур-тăр ку çынра.
Арçына çитерчĕç шкул умне
Курăнмашкăн халăх варрине.
Пĕр-пĕччен тăрать теме кĕтсе,

Ăнланать-тĕр пуля тивессе.
Сăмахне пуçларĕ офицер:
– Нимĕç çарĕ вăйлă çĕр çинче,
Тытăнса тăрать унпа тĕнче.
Чаплă раса урăх çук, – пĕрре,
Ирĕк пулмĕ – кĕрĕр çеç чĕрре!
Пирĕн майлă ĕçлĕр парăнса,
Пурнăç пырĕ сирĕн йăлт ăнса. –
Çакăн хыççăн утăм турĕ те, –
– Партизан ку, вырăс çар çынни,
Шутсăр вăрттăн ĕç тăваканни, –
Перĕр, – терĕ халăх илтмелле,
Кĕрĕслетрĕ! Выртрĕ ар çĕре.

***

Почтальон килет хире, Петя,
Çамрăк шкул ачи, хутаççăр-мĕнсĕр.
Çырусем кăларчĕ вăл шалтан.
Шухăшларĕ: лайăхчĕ йĕмесĕр.
Кăлавчи аппа вулать саспа:
«Сывă эп, аннеçĕм, çапăçатăп.
Таврăнсан пӳрт лартăпăр санпа,
Халĕ эпĕ блиндажра çыратăп».
Валяппа валли те пур çыру:
«Мăшăрăм, ман пĕчĕк хĕрĕм Галя,
Чĕрĕ-и, пурнатăр-и? Тăрук
Хăраса ан ӳкĕр, эп хавалла.
Нимĕçе çĕнсессĕн уй-хирте
Тытăп штурвала,тĕш-тырă вырăп.
Эп, Валя, – Украина çĕрĕнче,
Ман çырмашкăн майĕ çук халь урăх.
Чуп тăватăп», – тенĕ сăмахран
Татăлчĕ çырни. Мĕн тăвăн ĕнтĕ.
Вăрçă, чăн, хăрушă юмахран,

Ун сăнарĕ çутă кун-и? – Тĕтĕм.

***

Украина çĕрне лекрĕ Толя.
Тваттăн пулчĕç вĕсем Чăвашран:
Кĕçтен, Микулай, çамрăк Коля,
Тепĕр çиччĕшĕ тĕрлĕ йăхран.
Украина, тăван Украина,
Шевченко çĕр-шывĕ санра
Пĕлетĕп: вылять вырăс юнĕ,
Чăвашăн та пур-тăр, ара.
Сан паттăр çынну Тарас Бульба
Чăн, ĕмĕрлĕх кĕчĕ ăша:
Юратрăм ăна, пулчĕ туră,
Вăл халь те мана пулăшать.

***

Чăтлăх вăрманта,
Тĕттĕм вырăнта
Сар хĕвел пăхмасть,
Тĕтĕм те тухмасть.
Ушкăн партизан
Вăхăт-вăхăт çеç
Çăлтăрсем тухсан
Тытăнать ĕçе.
Вăрттăн-хĕрттĕнле,
Вăра-хурахла
Сăтăр ĕç тăван
Йышлăн вăрманта.
Çул çинче выртать
Акă пĕр виле.
Чикнĕ кăкăртан,
Вĕт шăна сĕрлет.
Кĕчĕç те яла, –

Пĕр сас-чӳ, шав çук.
Утрĕç шалалла, –
Чарăлать куçу:
Урлă каштаран
Çакнă ар çына,
Майкăчĕ вара
Тытаять аран.
Кăкăрĕ çине
«Партизан» тесе
Çырнă васкаса,
Авăк кукăртса.
Нимĕçе сутан
Полицай йытти –
Кăравчук хохол,
Сутăнчăк çын вăл,
Фашистсен пыйти.
Хĕрлĕ çар çыннин
Хушамачĕпе
Пулнă ячĕсем
Унăн хутĕнче.
Акă пĕр çына
Ерипен çĕрле,
Хуçнă ĕнсине,
Кăравчук – пĕрле.
Алă-урине
Каснă пуртăпа,
Ватнă ун пуçне
Мăн кувалтăпа.
Çакă полицай
Ирсĕр мĕн тери.
Кашкăртан усал,
Çук пуль ун чĕри.
Сывлама май çук
Украинăра:

Çын тухма хăрать
Çул çине, ара.
Урамра чухне
Полицай йытти
Шăршласа утать,
Фрицсене сутать.

***

Кăравчук çинчен
Тольăна такам
Панă каласа,
Вырăс ĕнтĕ. Кам?
Партизан туссем
Кĕчĕç картишне.
Çаврăнчĕç пăхса
Полицай çуртне.
Çенĕк кантăкне
Илчĕç кăларса.
Сикрĕç те ăшне
Курчĕç маччана:
Уçă-çке, витмен
Пĕр çĕрте ăна.
Вăхăт çитеймен
Е пулман хăма.
Сассăр, кушак пек,
Кĕчĕç шалалла.
Утрĕç ерипен
Шăппăн малалла.
Пысăк пÿлĕмре
Полицай выртать.
Вăйлă тĕлĕрет,
Йывăррăн сывлать.
Ывăннă пулас
Кăравчук чупса,

Хăй «ĕçне» туса,
Çынсене сутса.
Толя тусĕсем
Пăкăларĕç те
Унăн çăварне,
Тухрĕç çул çине.
Çаруран утать
Полицай Кравчук.
Кĕç айне ярать.
Ирĕклĕхĕ çук.
Вăрмана кĕрсен
Ватă йывăçран
Çакрĕç мĕскĕне,
Чунсăр этеме.
«Полицай » тесе
Çырнă хăмана
Курчĕç нимĕçсем
Каçхине кăна.
Чупрĕç унталла,
Чупрĕç кунталла
Тилĕрнĕ фрицсем,
Урмăш-çке вĕсем.

***

Валентина мĕн кăна тӳсмерĕ,
Сивĕре Улатăрта ĕçлерĕ.
Витĕр çил яратчĕ тумĕ ун,
Шартламаччĕ, шăннă пулĕ юн.
Кукăр-макăр окопсем вăл чаврĕ,
Темĕн чухлĕ хулăн йывăç касрĕ,
Вăкăрпа турттарчĕ хурăн, хыр,
Унпалан мухтаннă аслă хир.
Çурлапа та вырнă,тырă çапнă,
Сăвăрнă та йăтнă, кĕртнĕ, акнă…

Вăл турттарчĕ тырă Канаша,
Уйсем витĕр кӳршĕ Пăвана.

***

Çил-тăман тулта. Хăрушă.
Витере тăрать ĕне.
Айĕ ун пĕр нимсĕр, пушă.
Антармасть вăл пач сĕтне.
–Мĕн тăватăн, Валентина?
Улăма пĕччен каян?
Çийĕ унăн пăрлă, хытнă,
Çулсăр еплерех утан?
Урăм-сурăм, кур, çанталăк.
Чĕркуççи таран кĕрт-юр.
Чарăнмасть çума шăп талăк,
Эс уйра куратăн хур. –
Терĕ Вальăна Елюк, –
Улăм патнелле çул çук.
Валентина пурпĕр тухрĕ,
Утрĕ, утрĕ, утрĕ, утрĕ…
Шăлчĕ ун йĕрне тăман,
Тухрĕ тамăкшăн тăван.
Темĕччен çӳренĕ Валя,
Кĕтнĕ-кĕтнĕ пĕчĕк Галя,
Хĕрĕ йĕнине илтсен
Каçнă хăвăрт кӳршĕсем.
Вальăна хирте шыраççĕ,
Ир енне тăман лăпланчĕ,
Тупрĕç, чĕрĕ вăл, вилмен,
Пачĕç курăк, чей, эмел.
Эрехпе йăлт сăтăраççĕ
Урипе çан-çурăмне.
Выльăх айĕ. Кĕл сараççĕ.
Çăлнă мĕскĕн ĕнене.

***

Полицай Кличко килневаскать,
Таврана хăравçăн пăхкалать.
Ăвăс шĕпĕлтетрĕ:
– Тытрĕç-шим?
Уйăх йĕкĕлтерĕ:
– Пĕтрĕм-шим?
Список турĕ вăл ыран валли
Ăсатма Германи тăрăхне.
-Ялсенче хĕр, арăм сахал-и?
Нимĕçшĕн кăлартăр çын тарне.
Шухăшпа пăтраннă вăхăтра
Тахăш чĕнчĕ Кличкона ятран.
Хăпăл-хапăл çапрĕç пусĕнчен,
Сутăнчăкшăн сÿнчĕ çут тĕнче.
Ванькопа Янко лашапалан
Çĕмĕрттерчĕç юнашар яла,
Тумалла засада нимĕçсем,
Соньăна тытасшăн-мĕн вĕсем.
Кам пĕлтернĕ Тольăсем çинчен?
Кÿршĕ-и? Е юлнă йĕр таçта?
Нимĕç курнă кĕнине енчен?
Темĕн тĕрлĕ сан ыйту шалта.

***

Ванькопа Янкон
Ĕмĕт пур пуйма:
Виçĕ хутлă çурт
Ÿлĕм хăпартма.
Çирĕмшер гектар
Çĕр илес килет.
Кÿлĕ-вăрманпа
Пурăнас килет.
Выльăх-чĕрлĕхне

Пăхĕччĕç çынсем.
Ĕçĕн чурине
Тупĕччĕç вĕсем.
Чим, малта камсем?
Чарăнчĕç утсем.
Ванькопа Янккон
Хăпрĕ-çке сехри:
Курчĕç: Тольăпа
Унăн тусĕсем.
Хĕрлĕ çăлтăрпа,
Партизан вĕсем.
Автомат сасси
Кайрĕ таврана.
Ванькопа Янкон
Пĕтрĕ пуясси.

***

Арăмсем кĕлте çыхатчĕç
Ларчĕç кăшт канса илме.
Тарьяппа уйран кăларчĕ,
Сĕнчĕ ăшшăн астивме.
Камăн мĕн пурри йăлт паллă,
Сало татăкĕ – Сухвин,
Çамрăкскер, тĕреклĕ, халлă.
Пулаймарĕ-ха хĕр-кин.
Хуппипе пĕçернĕ акă
Лизаппа виç çĕр улми.
Марчаппа кăларчĕ çăкăр,
Апат-çимĕç куç тулли.
Тем йӳтенĕн çинĕ хыççăн
Шухăш кĕчĕ шӳтлеме.
Анюк кăмăлĕ, ай, уçă:
– Çитĕ вĕçĕмсĕр йĕме.
Кĕлтене лартар-и çĕлĕк,

Инкесем? Мăйне çыхар.
Ăçтарах-ха пĕçĕ тĕлĕ?
Йĕм пекки тăхăнтарар.
Эс, Çерук аппа, ăстаччĕ
Хайлама шўт-такмаксем.
Хут сана, итле, çырсамччĕ,
Пулăшар ăна, хĕрсем.
«Нимĕç кĕнĕ картана
Чăх пусса çиес шутпа.
Лекнĕ ăна тăмана,
Юлнă вăл хăрах куçпа.
Çур пăт таран атăпа
Пĕр фашист лакăштатать.
Петĕм ăна пуртăпа –
Пуçĕ çурăлнă, выртать.
Урнă нимĕç карланки
Ĕмĕрне те тăранмасть.
Ак çакăнта ун «пăкки»,
Шанса лартăр, – тăраймасть.
Пĕттĕр вăрлăху, фашист,
Гитлер йăхĕ, антихрист!
Парăнмастпăр ничерта,
Пулăпăр кĕç Берлинта».

***
Акă чупкалаççĕ нимĕçсем,
Çитрĕç васкаса грузовиксем.
– Шнэллер! Шнэллер! – терĕ те шофер,
Кĕрĕлтетрĕ çĕнĕрен мотор.
Лартрĕç хĕрсемпе каччăсене,
Хăвăрт çичĕ ют ĕçне тума.
Тĕрткелерĕç, çапрĕç вĕсене,
Майĕ çук кунта тăрса юлма.
Шăтăр-шăтăр турĕ çывăхра,

Нимĕссем ӳкеççĕ çĕр çине.
Шĕкĕлчерĕ вĕçĕм автомат,
Пурнăçларĕ партизан ĕçне.
Сикрĕç унталла та кунталла
Вырăс çĕрĕн çамрăк хĕрĕсем,
Хăшĕ çырмана, вăрманалла,
Хăтăласшăн пулчĕç çеç вĕсем.

Толя хупрĕ çакăнта куçне,
Вилмеллех амантрĕç ун пуçне.

***

Фашист чакнăçемĕн чакать,
Анчах парăнма шутламасть.
Смоленск, Белорусси çунать.
Епле-ха фашист пăчланмасть?
Вăл сăтăр тăвать чакнă майăн:
Кĕперсĕр çырма-çатрасем,
Йалт ишĕлчĕк çурт, тăйлăк-тайлăк,
Мăрьесĕр, хапхасăр килсем.
Çуннă танк куписем арăш-пирĕш,
Тĕтĕм-сĕрĕм шăрши сĕврĕлмен.
Вилнĕ выльăх шăмми, чашăк-тирĕк…
Кăмрăкланнă тăпра сивĕнмен.
Çулсăр-йĕрсĕр, ниме те пăхмасăр
Утаççĕ уйра салтаксем.
Пăхаççĕ вилме хăрамасăр,
Шикленчĕклĕх иртнĕ вĕсен.
Кулаççĕ çынсем куççуль витĕр
Курсассăн совет салтакне,
Сĕт-çу-и? Памашкăн йалт хатĕр,
Апачĕ çит лест хăйсене.
Пĕр чĕлĕ пек çăкăр сĕнӳçĕн
Карчăк-кĕрчĕкĕ ырă сунса:

«Телейлĕ çул пултăр, – тееççĕ, –
Килсемĕр киле çаврăнса».

***

Толя вил тăпри –
Украинăра.
Унăн çук тăрри,
Тĕмеске, ара.
Вăл хĕрессĕрех,
Нимсĕр-мĕнсĕрех,
Тупăксăр кăна
Чикнĕ-ске ăна.
Халĕ ун çине
Вĕçĕмсĕр снаряд,
Бомба тăкăнать,
Вилĕм шăхăрать.
Тĕмеске çинче
Кĕл чечек ÿсмест,
Чул чечек кăна.
Толя, шел сана.
Камшăн ют çĕрте
Хупрăн эс куçна?
Камшăн ют çĕрте
Хутăн эс пуçна?
Украинăна
Ирсĕр фашистран
Тасатан çынсем
Эпир мар иккен.
Вăрçă пуçлакан
Е пуç касакан,
Çурт-йĕр ватакан
Халь эпир иккен.
Вилчĕ мăшăру,
Ÿсрĕ сан хĕрÿ,

Тухрĕ вăл качча,
Çитĕнчĕ ача.
Ывăл авланса
Ӳсрĕç мăнуксем,
Толя, сан ăру –
Çĕнĕ мăнуксем.
Сăнӳкерчĕкне
Кашниех пăхать.
«Кукаçи», – тесе
Сан ятна калать.
Украинăра
Кам кампа вăрçать?
Паллă, – паллă мар,
Пĕр кăкран тымар.
Тен, чуну унтах
Сан вĕçсе çӳрет?
Тен, вăл çакăнта
Инкеке сирет?
Манмăпăр сана
Толя, ĕмĕрне.
Вилĕмсĕр сăнна
Кĕртнĕ чĕрене.

## Тупмалли


Çĕр. *Калав* 4

Тăлăх-турат пуличчен. *Калав* 14

Таврăну. *Калав* 24

Телейлĕ ачалăх. *Калав* 32

Днепр паттăрĕ. *Поэма* 42

Чул чечек. *Поэма* 53

Подписано в печать 12.01.2015. Формат 60х84/16.
Бумага офсетная. Печать оперативная.
Усл. печ. л. 5,0. Тираж 100 экз. Заказ № 78
Отпечатано с готовых оригиналов
в типографии ИП Варламов В.М.
г. Чебоксары, ул. Сверчкова, 6 «Б»
Тел. (8352) 41-00-83